чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

144-145 /26550-26551/ № № Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

ШĂМАТ КУН 2014, утă /июль/ 26

# Владимир Путин Президент Михаил Игнатьевпа тĕл пулнă



cap.ru сайтĕнчи сăн ӳкерчĕк

*Утă уйăхĕн 24-мĕшĕнче Мускавра Раççей Президенчĕ Владимир Путин Чăваш Республикин Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа тĕл пулнă. Республика Пуçлăхĕ Президента Чăваш Енĕн социаллă пурнăçпа экономика лару-тăрăвĕ пирки информаци панă. Уйрăммăн илсен регионра ача сачĕсен черечĕсене пĕтермешкĕн йышăнакан мерăсене, регионăн çамрăк çемьесене пулăшмалли программисене сӳтсе явнă.*

*Асăннă тĕл пулу хăш-пĕр политик, информаци хатĕрĕсем Михаил Игнатьев должноçран вăхăт çитмесĕрех каять тенисем чăнлăхпа килĕшсе тăманнине яр уççăнах çирĕплетет. В.Путин хăйне мĕнле тытни, тӳлек калаçни Михаил Васильевичăн ĕç-хĕлне ырланине, ăна шаннине пĕлтерет. Республика Пуçлăхĕ лару-тăрăва илемлетсе кăтартмарĕ, социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне пĕр ӳстермесĕр, тĕслĕхсемпе çирĕплетсе пĕтĕмлетрĕ.*

**В.ПУТИН: Михаил Васильевич, мĕнпе савăнтаратăр, республикăра ĕçсем мĕнле?**

**М.ИГНАТЬЕВ:** Хисеплĕ Владимир Владимирович, республикăра обществăпа политика лару-тăрăвĕ тăнăçлă: 128 наци тата 8 этника ушкăнĕн представителĕсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе, хăйсен йăли-йĕркине, пурнăç йĕркине, культурине сыхласа хăварса пурăнаççĕ – çакă Раççейĕн нумай енлĕ тата сайра тĕл пулакан культурин уйрăлми пайĕ пулса тăрать.

Республикăра пурăнакансен социаллă хăй туйăмлăхĕ лайăхланса пырать. Эпĕ мĕншĕн çапла калатăп-ха? Мĕншĕн тесен юлашки 20 çулта пуçласа, 2012 çултан тытăнса, демографи лару-тăрăвĕ ырă еннелле улшăнчĕ. Иртнĕ çула илес тĕк 2013 çулта халăх йышĕ хăй тĕллĕн ӳсесси 1027 çынпа танлашрĕ, çак туртăм паянхи кун та сыхланса юлать. Нумай ачаллă çемьесенчи пепкесен шучĕ юлашки икĕ çулта 11 процент ӳсрĕ, урăхла каласан çемьесенче виççĕмĕш, тăваттăмĕш ачасем çуралаççĕ.

**В.ПУТИН: Сирĕн çакна пула социаллă ыйтусем, ача сачĕсенче вырăнпа тивĕçтерессипе тата ыттипе çыхăннисем, тухса тăраççĕ ахăртнех? Ку ыйтусене мĕнле татса паратăр?**

**М.ИГНАТЬЕВ:** Сирĕн указсенче тата хамăрăн йышăнусенче палăртнă хавхалантару хушма мерисене, паллах, пурнăçа кĕртетпĕр. Ача сачĕсен строительствипе нумай ĕçлерĕмĕр, черетсем çинчен: 3 çултан аслăрах ачасен – хальхи самантри черет çеç; пирĕн тĕллев – 2015 çулта 1,5 çулти ачасен черет ыйтăвне татса парасси. Пĕтĕмпе 13600 вырăн йĕркеленĕ, хамăр çирĕплетнĕ çул-йĕр карттипе пирĕн хальхи йышши çĕнĕ ача сачĕсенче тепĕр 6700 вырăн тумалла.

**В.ПУТИН: Михаил Васильевич, сирĕн регионăн çамрăк çемьесене пулăшмалли, çав шутрах çурт-йĕрпе тивĕçтермелли, программăсем пур-и?**

**М.ИГНАТЬЕВ:** Пĕтĕмпе патшалăхăн 15 программине çирĕплетнĕ, çав шутрах çамрăк çемьесене пулăшмалли мерăсем тăрăх та. Эпир ипотека кредичĕсем енĕпе хушма мерăсем йышăнтăмăр: учительсем, сывлăх сыхлавĕн сферин ĕçченĕсем валли регион бюджечĕ шучĕпе тата тепĕр 4 процента субсидилетпĕр, çапла майпа коммерци банкĕсенче кредит илнĕ чухне кредит ресурсĕсен хакне чакаратпăр. Яланхи потребитель рынокĕнчипе танлаштарсан икĕ хута яхăн йӳнĕрех пулать.

Эсир питĕ лайăх ăнланатăр тата пирĕн ума тĕллев – çамрăк çемьесем ресурссемпе усă курма пултарччăр тесе – лартатăр. Яллă вырăнсенче ялăн социаллă программи тăрăх, ку тĕслĕхре "Ял территорийĕн çирĕп аталанăвĕ" программи тăрăх, 35 çула çитичченхи ӳсĕмри мар граждансем те тавăрса памалла мар тӳлевсене тивĕçеççĕ. Эсир пирĕн ялсенче пулса курнă: ялсем аталанаççĕ, вĕсемпе пĕрлех – пĕчĕк тата вăтам бизнес, ял хуçалăхĕ.

Ĕç вырăнĕсемпе тивĕçтерес йывăрлăх тăрса юлать. Ку ыйтусене регионăн тата муниципалитет влаç органĕсенче общественноç пулăшнипе тапхăрăн-тапхăрăн, утăм хыççăн утăм туса татса парăпăр.

3 стр.

# Республика Правительстви шантарни пурнăçланать

***Утă уйăхĕн 23-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ĕçлĕ визитпа Улатăр хулинче пулнă.***

Районăн тĕп больницинче Юрий Боголюбов тĕп врач ача çуратмалли уйрăм ĕçĕпе паллаштарнă. «Ача çуратмалли сертификат» программа пулăшнипе больницăна çĕнĕ техникăпа тивĕçтернĕ, врачсем çителĕклĕ, эмелсем, кирлĕ ытти материал тĕлĕшпе чăрмав çук. Утă уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне Улатăрта халăх йышĕ хăй тĕллĕн чакса пырасси 8,5% танлашнă, Улатăр районĕнче – 13,9%. Ача çуратмалли уйрăмра ăста тата пĕлÿллĕ персонал ĕçлет, чăн та, педиатрсем çитмеççĕ. Чылай çул ĕнтĕ хулара тухашри сăлтавсене пула тин çуралнă ачасем вилнĕ тĕслĕх пулман. Республика Пуçлăхĕ медиксемпе, ача çуратнă хĕрарăмсемпе калаçнă, вĕсем кунти пулăшу ĕçĕсен пахалăхĕ тивĕçтернине палăртнă.

«Алатырьторгсервис» МУПăн хула пасарĕнче пулнă. Кунта 800 яхăн суту-илÿ выранĕ йĕркеленĕ. Михаил Игнатьев ассортимента тишкернĕ, сентресем çинче Чăваш Енре хатĕрленĕ продукци пуррипе кăсăкланнă. Улатăрсем палăртнă тăрăх – çак продукцие халăх лайăх туянать. Михаил Васильевич та республикăра туса кăларакан апат-çимĕç паха пулнине палăртнă май ăна ытларах сутмалли çинчен каланă.

Пасар патĕнче республика Пуçлăхне хула çыннисем сырса илнĕ, тĕрлĕ ыйтăва çĕкленĕ – вĕсем пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх ĕçне лайăхлатассипе çыхăннă. Тротуарсем, картишсенчи çулсем арканни, çуртсен тăррисем çумăр яни, нумай хваттерлĕ çуртсен путвалĕсенчи пăрăхсем юхăнни, райбольницăра уйрăм специалистсем патне çырăнма йывăрри, уйрăм çынсен çурчĕсем вырнаçнă территорисене тирпейлемени çинчен каланă. Çĕкленĕ çак ыйтусене татса парассине Михаил Васильевич хăй тĕрĕслесе тăма шантарнă.

«Стрелка» микрорайонти тĕл пулура та хула çыннисем картишсем тирпейсĕрри, коммуналлă пулăшу ĕçĕсен пахалăхĕ тивĕçтерменни, çуртсене юсаманни пирки ÿпкелешсе калаçнă. 34-мĕш çуртри пуçарулла çынсем вара хăйсен картишне хăйсемех тирпейлесе хăтлăх кÿнĕ. Вĕсем Михаил Игнатьева тав тунă: «Хула сăн-сăпачĕ улшăнни куç кĕрет, эсир Улатăршăн чунпа тăрăшнине туятпăр».

Республика Пуçлăхĕ 4 çул каялла Сăр урлă хывнă кĕпер çинче пулнă, юхан шывăн сулахай çыранĕнчи эрози хăрушлăхне хăй куçĕпе курса ĕненнĕ. Унтан гражданçене юхăннă тата авари пулма пултаракан çурт-йĕр фондĕнчен куçармалли тĕллевлĕ программа мĕнле пурнăçланнипе паллашнă. Горький урамĕнчи нумай хваттерлĕ 4-мĕш çуртри 15 хваттерте пурăнакансене 2010 çулта куçарнă. Кайран кивĕ çурта пăснă, лаптăка «Нива и К» ООО 23 хваттерлĕ çĕнĕ çурт тума харпăрлăха туяннă. Унта темиçе çемье куçнă. Çынсене кивĕ çуртсенчен куçармалли программăна Улатăрта 2017 çулта вĕçлесшĕн.

Ачасен «Сказка» паркĕнче Михаил Игнатьев «Железнодорожник» ТОСра пурăнакансемпе курнăçнă. Çынсем паркра çĕнĕ аттракционсем вырнаçтарма, ачасем валли вăйă площадкисем йĕркелеме, кинотеатр уçма ыйтнă. Михаил Васильевич Улатăрсене хула ыйтăвĕсене çывăха илнĕшĕн, унăн пурнăçне хастар хутшăннăшăн тав тунă: «Эсир хăвăрăн хулана юратни, ăна лайăхрах тума ăнтăлни куç кĕрет».

Унтан хулан социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн ыйтăвĕсемпе канашлу ирттернĕ. Ăна уçнă май республика Пуçлăхĕ муниципалитетсенче пулса, халăхпа калаçса чăн лару-тăру тĕлĕшпе усăллă та тĕплĕ информаци илнине палăртнă. Михаил Игнатьев шухăшĕпе – республикăри пĕтĕмĕшле лару-тăрăва кура хуласемпе районсем аталанни палăрать, врачсен, учительсен, ача сачĕсен воспитателĕсен, культура ĕçченĕсен шалăвĕ ÿсет, пурнăç пахалăхĕ лайăхланать. Чăн та, çак аталанăва хăвăртлатас килет. «Пурте пĕтĕмпех хăвăрт улăштарасшăн, анчах ялан апла пулмасть. Çапах республика Правительстви хăй шантарнине туллин пурнăçлать», – тенĕ вăл.

Улатăрсем пултарнă таран çурт-йĕрпе картишсене тирпейлесе хăтлăлатаççĕ, таврана илемлетеççĕ, Михаил Васильевич хăйсен хулине юратакансене тата ăна хăйсен вăйĕпе лайăхлатма тăрăшакансене тав тунă. Çапах хуçа алли курăнман вырăнсем те пур. Тирпейлемен йывăçтĕм, çÿп-çап, газонсем çинчи автомобильсем – çакă авалхи хулана илем кÿмест. Михаил Игнатьев хула çыннисене Улатăр территорине тирпейлемешкĕн хутшăнма чĕнсе каланă. «Шел, мĕн пур ĕç валли укçа çитмест, çапах йĕрке пулмалла», – тенĕ ЧР Пуçлăхĕ.

Утă уйăхĕн 11-мĕшĕ тĕлне Улатăр хула администрацийĕн тата ăшăпа тивĕçтерекен организацисен муниципалитет нушисем валли усă курнă çут çанталăк газĕшĕн тÿлемелли парăмĕ 36,2 млн тенкĕпе танлашнă. Унăн пĕтĕм калăпăшĕ – «Улатăрти пĕрлештернĕ котельнăйĕсемпе ăшă сечĕсен предприятийĕ» МУП тÿпи. ЖКХ организацийĕсен электроэнергипе çыхăннă парăмĕ – 51,7 млн тенкĕ. Хула çыннисем пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне 49,1 млн тенкĕ тÿлесе татман.

Михаил Игнатьев хула администрацине управляющи компанисемпе пĕрле ЖКХ парăмĕсене шыраса илес енĕпе мерăсем йышăнма, халăхран пухакан укçан малалли куçăмне çирĕп тĕрĕслесе тăма хушнă. Çавăн пекех арендăна панă çĕр лаптăкĕсемшĕн татма тÿлевсене суд урлă шыраса илмеллине палăртнă, утă уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне çак парăм 2,7 млн тенке çитнĕ.

Улатăр хулин социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕ çинчен администраци пуçлăхĕ Михаил Марискин доклад тунă. Экономика аталанăвĕн министрĕ Владимир Аврелькин Улатăрта ĕç укçине вăрттăн схемăсемпе тÿлекен предприятисем пурри çинчен каланă, çакна вĕсен ĕçченĕсен официаллă шалăвĕ пурăнма кирлĕ виçерен те пĕчĕкреххи çирĕплетет. Çавăн пекех министр хулара предпринимательсен шучĕ ÿссе пынине палăртнă, çакă – бизнес валли аван условисем йĕркеленин палли.



Михаил Игнатьев аптекăсенче спиртлă шĕвексем сутма юраманнине аса илтернĕ. Калăпăр, Улатăрта республика Пуçлăхĕ ыйтнипе пĕр хаçат журналисчĕ «Фармация» аптека сетьне кайнă, унта виçĕ «фанфурик» туяннă. «Фармация» вара çакнашкал шĕвексене сутма чарăнасси çинчен калакан меморандума чи малтанхисен шутĕнче алă пуснă. «Тепĕр хут калатăп, аптекăсем – çакнашкал шĕвексем мар, эмел препарачĕсем сутакан учреждениесем», – тенĕ Михаил Игнатьев.

Вице-премьер – строительство министрĕ Олег Марков çурт-йĕр строительстви, граждансен уйрăм категорийĕсене хваттерсемпе тивĕçтерни çинчен каласа панă. Тариф службин ертÿçи Альбина Егорова утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен тарифсем ÿсни çуртсен хăш категорийĕсене пырса тивнипе паллаштарнă.

Çул çÿреве пĕтĕмлетнĕ май Чăваш Ен Пуçлăхĕ хула администрацийĕ умĕнчи тĕллевсене палăртнă. Чи малтанах çулсене юсас, сывлăх сыхлавĕнчи, ЖКХри çивĕч ыйтусем тĕлĕшпе тимлĕ пулмалла. «Улатăрсем çĕкленĕ мĕн пур ыйтăва шута илнĕ, кашнине хуравлăпăр. Çивĕч ыйтусене татса памалла – хула çыннисем эпир паянхи куна вĕсемшĕн усăллă иртернине курччăр», – тенĕ Михаил Васильевич.

**Е.АЛЕКСЕЕВ**

## Чăваш Республикин суту-илÿ тытăмĕн хисеплĕ ĕçченĕсем!

Сире професси уявĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп!

Суту-илÿ – халăхăн пурнăç тивĕçтерĕвĕн пĕлтерĕшлĕ сфери тата Чăваш Ен экономикин йĕркеллĕ аталанса пыракан отраслĕсенчен пĕри. Унта республикăра пурăнакан 50 пин ытла çын ĕçлет.

Республикăра суту-илÿ организацийĕсен шучĕ çултан çул пысăкланса, вак тавар çаврăнăшĕ пĕр вĕçĕм ÿссе пыраççĕ, çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркеленеççĕ. Çав вăхăтрах пахалăх улшăнăвĕсем те палăраççĕ: халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерекен илĕртÿллĕ çĕнĕ мелсем ĕçе кĕреççĕ, сервис лайăхланать, таварсемпе пулăшу ĕçĕсен ассортименчĕ пуянланать. Суту-илÿ ĕçченĕсен ăсталăхĕпе ят-сумĕ, пултарулăхĕ ÿсет, вĕсем туянакансем тĕлĕшпе ырă кăмăллăрах тата тимлĕрех пулса пыраççĕ, хăйсен тивĕçĕсене тăрăшарах пурнăçлаççĕ – çакă нумай чухне Чăваш Енре пурăнакансен кăмăлĕпе социаллă хăй туйăмлăхне витĕм кÿрет.

Влаç органĕсем, суту-илÿ предприятийĕсем тата общество организацийĕсем пĕр-пĕрипе çыхăнса тухăçлă ĕçленĕрен республикăра потребительсен прависем шанчăклăн хÿтĕленеççĕ. Çав вăхăтрах кÿрекен пулăшу ĕçĕсен пахалăхĕ паянхи кун ыйтнине тивĕçтертĕр тесен тата нумай ĕç пурнăçламалла-ха. Республикăн суту-илÿ сферин ĕçченĕсем хăйсен умĕнчи тĕллевсене ăнăçлă татса парасса шансах тăратăп.

Сире çирĕп сывлăх, тав сăмахĕ калакан туянакансем, телей тата ырлăх сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ**
**М.ИГНАТЬЕВ.**

## *Чăваш Республикин Пуçлăхĕн УКАЗĔ*

## Чăваш Республикин территорийĕнче пăши тытмалли лимитпа квота çинчен

Федерацин 24-мĕш «Раççей Федерацийĕн сунар тата сунар ресурсĕсене упраса хăварасси, саккунĕсен уйрăм акчĕсене улшăнусем кĕртесси çинчен», Чăваш Республикин 13-мĕш «Сунар тата сунар ресурсĕсене упраса хăварасси çинчен», Раççей Федерацийĕн Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствин 2014 çулхи утă уйăхĕн 2-мĕшĕнчи 04-15-29/13718-мĕш «Сунар ресурсĕсене тытмалли лимита палăртасси çинчен» çырăвĕпе тата Чăваш Республикин Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствин 2014 çулхи çĕртме уйăхĕн 5-мĕшĕнчи 474-мĕш «Чăваш Республикин территорийĕнче 2014 çулхи çурла уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 2015 çулхи çурла уйăхĕн 1-мĕшĕччен пăши мĕн чухлĕ тытмаллине /лимитне, квотине/ ĕнентерекен материалсене тĕпе хурса патшалăхăн экологи экспертизин эксперт комиссийĕн пĕтĕмлетĕвне çирĕплетесси çинчен» хушăвĕпе килĕшÿллĕн **çапла йышăнатăп:**

1. Чăваш Республикин территорийĕнче 2014 çулхи çурла уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 2015 çулхи çурла уйăхĕн 1-мĕшĕччен, федерацин çут çанталăкăн уйрăмах сыхлакан лаптăкĕсенчи сунар ресурсĕсен вырăнĕсенчи лимитсемсĕр пуçне, пăши тытмалли лимита çирĕплетес;

Чăваш Республикин территорийĕнче 2014 çулхи çурла уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 2015 çулхи çурла уйăхĕн 1-мĕшĕччен, федерацин çут çанталăкăн уйрăмах сыхлакан лаптăкĕсенчи сунар ресурсĕсен вырăнĕсенчи квотăсемсĕр пуçне, пăши тытмалли квотăна çирĕплетес.

2. 2014 çулхи çурла уйăхĕн 1-мĕшĕнчен çаксем хăйсен вăйне çухатассине çирĕплетес:

республика Пуçлăхĕн 2013 çулхи утă уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 75-мĕш «Чăваш Республикин территорийĕнче сунар ресурсĕсене тытмалли лимитпа квота çинчен» Указĕ;

республика Пуçлăхĕн 2013 çулхи раштав уйăхĕн 17-мĕшĕнчи 130-мĕш «Республика Пуçлăхĕн 2013 çулхи утă уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 75-мĕш Указне улшăнусем кĕртесси çинчен» Указĕ.

3. Çак Указ мĕнле пурнăçланнине тĕрĕслесе тăма Чăваш Республикин чĕр чун тĕнчин объекчĕсемпе вăл пурăнакан вырăна сыхлас, тĕрĕслес тата чĕрлĕхпе усă курассине йĕркелес тĕлĕшпе ĕçлекен патшалăх службин ертÿçине – Чăваш Республикин чĕр чун тĕнчин объекчĕсемпе вăл пурăнакан вырăна сыхлакан, тĕрĕслекен тата чĕрлĕхпе усă курассине йĕркелекен патшалăхăн тĕп инспекторне хушас.

**Чăваш Республикин**
**Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**
Шупашкар, 2014, утă, 22,106 №.

Госслужба занятости Чувашии

# Ача амăшĕсем вĕренеççĕ

***Ача пăхмашкăн илнĕ отпускри хĕрарăмсене ĕç рынокĕ ыйтакан профессисене алла илме сĕнеççĕ.***



***• Ача пăхмашкăн илнĕ отпуск вăхăтĕнче маникюрша профессине вĕренни хĕрарăмсене пурнăçра хăйсен вырăнне тупма май парать.***

Чылай хĕрарăмшăн декрет отпускĕ – кулленхи тимлĕ ĕç хыççăнхи кану. Çапах та çамрăк амăшĕ килте ларса ирттернĕ вăхăтра ĕç вырăнĕнче лару-тăру – условисем те, специалистсенчен ыйтасси те – улшăнма пултарать. Хăш-пĕр амăшĕшĕн вара ачапа ларнă отпуск кунĕсем – татăклă улшăну тумалли тапхăр: пепкене пăхнипе пĕрлех çĕнĕ профессие вĕренме май килет.

Пурнăçпа тан пыма ăнтăлакан тата çĕнĕ ĕçе хăнăхас тĕллевлĕ хĕрарăмсене кун пек чухне Чăваш Республикин «2012-2020 çулсенче ĕçпе тивĕçтересси» патшалăх программи пулăшать. Асăннă документпа килĕшӳллĕн кăçал професси вĕренĕвĕ тата профессин хушма пĕлĕвĕ илмешкĕн ачана 3 çула çитиччен пăхма илнĕ отпускри 400 хĕрарăма яма палăртнă. Çав шутра 300-не – декрет отпускне тухиччен ниçта та ĕçлеменнисене.

Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин специалисчĕсем пĕлтернĕ тăрăх – «Чăваш Республикин 2014 çулхи тата 2015 тата 2016 çулсенчи тапхăрти республика бюджечĕ çинчен» саккунпа килĕшӳллĕн асăннă ушкăна кĕрекен хĕрарăмсен професси вĕренĕвне йĕркелемешкĕн кăçал 5717,8 пин тенкĕ уйăрма палăртнă. Çулталăк пуçланнăранпа асăннă тĕллеве пурнăçламашкăн 2505,5 пин тенкĕ янă: çав шутран ачана 3 çула çитиччен пăхмашкăн отпуск илнĕ амăшĕсем валли – 624,1 пин, ачана виçĕ çул пăхмашкăн отпуск илнĕ, анчах унччен ниçта та ĕçлеменнисем валли – 1881,4 пин тенкĕ.

Ку енĕпе палăртнă тĕллевсем ăнăçлă пурнăçланаççĕ: ултă уйăхра професси вĕренмешкĕн ачана 3 çула çитиччен пăхакан 292 амăшĕ /çулталăкра палăртнин 73 проценчĕ/ кайнă. Çавсенчен чылайăшĕ /234/ ача çуратиччен ниçта та ĕçлемен. Вĕсем ĕç рынокĕ ыйтакан 19 специальноçа хăнăхнă, бухгалтер /квалификацие пуянлатнă тата çĕнĕ хăнăху илнĕ/, водитель, дизайнер, маникюрша, менеджер, котельнăй операторĕ, заправка станцийĕсен операторĕ, парикмахер, сутуçă-кассир, кадр пайĕн инспекторĕ тата ытти пулма тĕллев тытнă. Вĕренĕве çирĕплетнĕ килĕшӳ тăрăх пĕлӳ паракан 11 организацире йĕркеленĕ.

2014 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне ача амăшĕсенчен 203-шĕ хăйсем кăмăлланă профессисене алла илнĕ. Вĕсене пурне те ĕç тупса панă. Служба органĕсен кăтартăвĕсем тăрăх – вĕренӳ хыççăн ĕçе вырнаçтарас тапхăр виçĕ уйăхран иртмен.

**Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин пресс-служби.**

### Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕнче граждансене 2014 çулхи çурла уйăхĕнче харпăр хăй ыйтăвĕсемпе йышăнмалли КУНСЕМ

### /Цифрăсемпе йышăну кунĕсене палăртнă/

| | |
|---|---|
| **26 Ю.А.ПОПОВ** | Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ |
| **12 А.П.КНЯЗЕВ** | Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ – Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Бюджет, финанс тата налуксем енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ |
| **27 О.В.МЕШКОВ** | Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ – Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Экономика политики, агропромышленноç комплексĕ тата экологи енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ |
| **21 Н.В.МАЛОВ** | Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Патшалăх строительстви, вырăнти хăй тытăмлăх, Регламент тата депутат этики енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ |
| **28 П.С.КРАСНОВ** | Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Социаллă политика тата наци ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ |

Граждансене Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн йышăну пӳлĕмĕнче çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 10 çурт, 3-мĕш пӳлĕм.

Йышăну вăхăчĕ: 10 сехетрен пуçласа 17 сехетчен.

Ыйтса пĕлмелли телефон: 64-21-67.

# Владимир Путин Президент Михаил Игнатьевпа тĕл пулнă

**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.**

**В.ПУТИН: Эсир экономикăри лару-тăрăва пĕтĕмĕшле мĕнле хаклатăр?**

**М.ИГНАТЬЕВ:** Экономикăн чăн сексторĕ пирки çакна калама пултаратăп: паянхи кун тĕлне çур çул пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх пирĕн ырă динамика сыхланса юлать. Çак туртăм, экономикăн чăн секторĕн аталанăвне тĕпе хурса, çулталăк кăтартăвĕсемпе те сыхланса юлас шанăç пур. Ултă уйăх кăтартăвĕсемпе промышленноç производствин индексĕ 104,7 процентпа танлашнă, çулталăкпа 104 процент пулать.

Ял хуçалăхне илес тĕк çанталăк условийĕсене пула пирĕн чăрмавсем пулчĕç, çавăнпа 100 процента çитеймерĕмĕр. Кăçал ырă динамика сыхланса юлать, çулталăкра 105 процент патнелле тухăпăр.

Строительство комплексĕнче – 112 процент, пурăнмалли çурт-йĕр хута ярасси те ӳсет – 103-104 процент. Пĕр çын пуçне 0,7 тăваткал метр тăватпăр: хулара та, яллă вырăнсенче те.

Пĕтĕмĕшле илсен пурăнмалли çурт-йĕр хăпартассин хăвăртлăхне ӳстерсе пырăпăр, мĕншĕн тесен конкуренци тумалла – унăн хакĕ вăтам класшăн та юрăхлă пултăр. Ятарлă лаптăксем пур, федераци шайĕнче йышăннă программăсем пур, эпир çак программăсенче хутшăнатпăр. Çуртсене пĕр вырăнарах комплекслăн лартмалли территорисем пур. Инфратытăм валли инвестицисем явăçтарса эпир паянхи хаксене çав шайрах сыхласа хăварма пултаратпăр.

**В.ПУТИН: Аван.**

*Ыйтăм*

# Саккун проектне сӳтсе яватпăр

***Пирĕн республикăра, Раççейĕн ытти кĕтесĕнчи пекех, федерацин 136 ФЗ №-лĕ саккунне питĕ анлăн тишкерчĕç, ку ĕç малалла та пырать. ЧР Юстици министерстви «Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелесси çинчен» саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен» саккун проектне хатĕрленĕ, ăна обществăра сӳтсе явма тăратнă. Çак саккун тата проект пирки республикăри влаç представителĕсемпе «Хыпар» тусĕсем мĕн шухăшлаççĕ-ши?***

**Олег МЕШКОВ, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ – ЧР Патшалăх Канашĕн Экономика политики, агропромышленноç комплексĕ тата экологи енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ:**



– Ял тăрăхĕн пуçлăхне палăртмалли йĕрке пирки тĕрлĕрен шухăшлакансем пулчĕç. Çапах та ăна ытларахăшĕ вырăнти депутатсен йышĕнченех суйламалла терĕ. Урăхла каласан малашне пуçлăх пулас текенсен малтан депутата суйланмалла. Енчен те ял тăрăхĕн пуçлăхĕ вăхăт çитмесĕрех ĕçрен кайсан депутатсем ун вырăнне хăйсен йышĕнченех тепĕр çынна уйăрса лартĕç.

Муниципалитет районĕн пуçлăхне вара малашне халăх суйлĕ. Районта хальхи пек иккĕ мар, пĕр ертӳçĕ çеç пулĕ, вăл политика, экономика, социаллă тата ытти ыйтăва йăлтах хăй татса парĕ. Район депутачĕсен Пухăвĕн ертӳçи вара депутатсемпе çеç ĕçлĕ. Тепĕр шухăша та асăнса хăварас килет. Халĕ районта тата райцентрта – пĕрер пуçлăх. Райцентрти ял тăрăхĕн пуçлăхĕн должноçне халăх суйланипе йышăнать. Ку йĕрке ĕççене тытса-йĕркелесе пырассине чакарать. Райцентрăн хăйĕн уйрăм пуçлăх кирлех мар, уншăн район ертӳçин яваплă пулмалла.

Хуласене районсем çине пайламалла мар: çакă штата ӳстерет, хулана ертсе пырас витĕмлĕх вара чакать. Çитменнине, ку районсен бюджечĕсем пĕрешкел пулмĕç, çавна май тĕрлĕ ыйту сиксе тухĕ. Хулара, хальхи пекех, икĕ ертӳçĕ кирлĕ: пĕри – хула пуçлăхĕ, тепри – хула администрацийĕн пуçлăхĕ. Маларах асăнни депутатсем умĕнче отчет тума тивĕç. Паянхи кун Шупашкар хула пуçлăхĕ хула администрацийĕпе, депутатсен корпусĕпе пĕрле килĕштерсе ĕçлет. Малашне те çаплах пултăрччĕ.

**Сергей АРТАМОНОВ, Çĕрпӳ район администрацийĕн пуçлăхĕ:**



– Федераци саккунне халăхпа сӳтсе явни питĕ лайăх, мĕншĕн тесен çынсем кăсăклă тĕрлĕ шухăш калаççĕ. Ĕç ушкăнĕ пирĕн район активĕпе те тĕл пулчĕ. Кашнин шухăш-кăмăлне шута илни аван-çке. Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене малашне вырăнти депутатсем хăйсен йышĕнчен суйлĕç. Ку меле ырлатăп эпĕ. Юлашки вăхăтра çынсем ял тăрăхĕн депутачĕ пуласшăнах мар, «Вĕсен укçи çук, интереслĕ мар, халăх вăрçать çеç», – тет чылайăшĕ. Малашне вара вырăнти депутатсем ял тăрăхĕн пуçлăхĕ те пулма пултараççĕ-çке, çакна пулах «халăх тарçисен» статусĕ те ӳсмелле пек туйăнать. Ял тăрăхĕсен хальхи пуçлăхĕсем: «Пире халăх суйласан чыс-хисеп ытларах, статус пысăкрах пулĕччĕ», – теççĕ. Анчах хисепе чи малтан лайăх ĕçленипе çĕнсе илмелле. Ертӳçĕне кирек хăш мелпе суйласан та вăл тăрăшса вăй хучĕ тĕк – ăна хисеплеме пуçлаççех.

Район пуçлăхĕ пĕрре пулмалла – çакна та ырласа йышăнатăп эпĕ. Ăна халăхăн суйламалла. Пĕр районта икĕ ертӳçĕ кирлех мар. Чăн та, эпир хамăр район пуçлăхĕпе килĕштерсех ĕçлетпĕр.

**Николай ПЕРЕПЕЛКИН, Патăрьел районĕнчи Тури Туçа ял тăрăхĕн пуçлăхĕ:**



– Федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене йĕркелемелли мелсене регионсене хăйсене суйламашкăн ирĕк пани – ырă пулăм. 2015 çултан пуçласа ял тăрăхĕсем вырăнти пĕлтерĕшлĕ 13 ыйтăва тытса пыма тивĕç. Хальхи вăхăтра пирĕн 39 полномочи, вĕсене укçа-тенкĕпе тивĕçтермеççĕ, çавăнпа пурне те пурнăçа кĕртме май килмест. Унсăр пуçне тепĕр самант та пур. Тĕрĕслекен органсем ял тăрăхĕсене килеççĕ те устава пăхаççĕ, пĕр-пĕр ĕçшĕн эпир айăплă-и е çук-и, ăна пурнăçлама май пур-и е çук-и – ăна уяса тăмаççĕ, çав-çав саккунпа килĕшӳллĕн тесе штраф тӳлеттереççĕ. Ун пек лару-тăрăва хам та лексе курнă. Полномочисене чакарнин япăх енĕсем те пулма пултараççĕ паллах.

Пуçлăхсене уйăрса лартасси пирки калас тăк – манăн шухăшпа, тӳрĕ суйлавсем ирттерни вырăнлăрах.

**Николай ПЛАТОНОВ, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ строителĕ:**



– Муниципалитет районĕн пуçлăхне малашне халăх суйлĕ. Çакна ырласа йышăнтăм. Кунашкал йĕрке маларах та, эпĕ ун чухне Шупашкар районĕн депутачĕччĕ, вăйра тăратчĕ, ăна 2004 çулта улăштарчĕç. Халĕ акă каллех ун патнех таврăнатпăр. Ял тăрăхĕн пуçлăхне те, манăн шухăшпа, халăхăнах суйламалла. Анчах Чăваш Республикин саккунĕн проектĕнче ăна вырăнти депутатсем хăйсен йышĕнчен палăртассине калană.

Ку проектăн 48-мĕш статйинче вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен çак тăрăхра пурăнакансене вырăнти бюджет проекчĕпе, ăна çирĕплетни пирки калакан йышăнупа, пурнăçлани çинчен çулталăк отчечĕпе тата ытти документпа паллаштармаллине – енчен те вĕсене пичетлесе кăларма май çук пулсан – çырса хăварнă. Çакă питех те кирлĕ. Вырăнти влаç ĕçĕ çинчен халăхăн пĕлсе тăмалла.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА калаçнă**

Тĕпел

# Тĕп тĕллев – пайтаçăсене хӳтĕлесси

*«Хыпар» ыйтăвĕсене Чăваш Республикинче предпринимательсен правине хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăй Владимир Иванов хуравлать*

**– Патшалăхăн çак должноçне хăçан çирĕплетнĕ?**

– Республика Пуçлăхĕ 2013 çулхи утă уйăхĕн 30-мĕшĕнче «Чăваш Республикинче предпринимательсен прависене хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăй çинчен» саккуна алă пусрĕ, – терĕ Владимир Николаевич. – Вара уполномоченнăй институчĕ йĕркелеме тытăнчĕ. Ирĕксене, саккунлă пайталăхне пăснăран шар курнă бизнесменсене хӳтĕлемелли тытăм пулса тăчĕ. Ăна никĕсленĕренпе çак уйăх вĕçĕнче çулталăк çитет. Вун пĕр уйăхра ман ятпа çырса тата сăмах вĕççĕн 143 çăхав тăратрĕç. 116-шне юристсемпе, тĕрлĕ отрасльти экспертсемпе пĕрле тишкертĕмĕр. Ытти – кулленхи ĕçре. Пысăкрах пайĕнче тĕпре – çĕр прави, налук, администрацилĕхпе çыхăннă ытти ыйту.

**– Инвестици хывассине, ĕçлĕ çынсен йышне ӳстерессине ырă витĕм кӳрейрĕр-и?**

– Манăн тĕп тивĕççенчен пĕри – бизнеса аталантарма май тăвасси. Саккунсене улшăну-хушăм кĕртсе ĕçлĕ çынсене хастарлăха ӳстермешкĕн пулăшатăп. Вĕсем ман пата кашни район-хуларан пĕрешкел ыйту тăратсан сăлтавне уçăмлатассишĕн саккунсене, вăл пырса тивекен правăпа республикăра еплерех усă курнине, ытти регион тĕслĕхĕсене тĕпчетĕп. Саккунсем пурнăçа шута илсе пĕтерейменнине, хирĕçлениие курсан хамăн сĕнĕве РФ Налук службин, Монополипе кĕрешекен службăн Чăваш Енри управленийĕсен, ЧР Прокуратурин, ытти ведомство çумĕнчи общество канашĕн ларăвĕнче сӳтсе явма сĕнетĕп. Экспертсемпе пĕрле шăйрăка пĕтерме май шыратăп. Норматив-право акчĕсене çĕнетме улшăну-хушăм проекчĕсене хатĕрлетĕп. Саккунсене лайăхлатассишĕн пуçару туса вĕсене республика Пуçлăхĕ, РФ Президенчĕ çумĕнчи предпринимательсен прависене хӳтĕлекен уполномоченнăй патне çитеретĕп.

**– Нумай сӳтсе явма тивнĕ тĕслĕхпе паллаштарсамăр?**

– Шупашкарта сас-хура чылай сарни патне тепре таврăнам-ха. Тĕп хула администрацийĕ 2000 çулсенче усламçăсене тавар сутма темиçе çуллăха çĕр тара панă. Хăйсене уйăрнă лаптăкра никĕс ярса кирпĕчрен çурт хăпартман, павильон çеç лартнă. Вĕсем администраципе çĕре тара илни пирки килĕшӳ çирĕплетнĕ. Вăл вăйран тухсан темиçе çуллăха тăснă. Халĕ сутуçăсене çĕр тара памалли йĕрке урăхла. Унпа усă курмалли вăхăт тухсан унăн малашнехи арендаторне аукционра палăртаççĕ.

Харпăрлăхçăсем стационар шутланман çав объектсене туса, вырнаçтарса тăкакланнине, манăн пайтаçăсене хӳтĕлемелли лайăх пĕлетĕп. Ытти бизнесменăн та çав лаптăксемпе усă курма право пур. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕ çакна тĕпе хурса аукцион ирттерет, çĕнтерӳçĕсене тара парать. Саккун предпринимательсене пĕр-пĕринпе тупăшса ĕçлеме май кӳрет. Ку йĕрке – çирĕп, анчах – тĕрĕс.

Çĕрпе усă курнăшăн хыснана кĕмĕл вăхăтра хывнисен конкурса хутшăнса малтан çирĕплетнĕ килĕшĕве çĕнĕ хакпа тăсма право ытларах. Анчах ку – пĕчĕк тата вак бизнесшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Пайтаçăсемпе те, тӳре-шарапа та, экспертсемпе те калаçрăм. Икĕ ене те çырлахтаракан йышăну патне çитрĕмĕр. Муниципалитетăн пĕчĕк тата вăтам предпринимательлĕхе пулăшмалли программипе килĕшӳллĕн çĕр тара илнĕ чух пайтаçă куракан тăкака тĕп хула хыснинчи нухратран саплаштарма сĕнтĕм. Саккун çапла тума ирĕк парать. Манăн пата çыру çитернисен бизнесне ку пуçарупа хӳтĕлесе хăварасса шанатăп.

**– Ĕçлĕ çынсен прависемпе саккунлă пайталăхĕн тĕревленине çынсене пĕлтерсе тăрасси мĕнле шайра?**

– Усламçăсем хăйсене еплерех туйнине, хамăн ĕçе çутатакан пĕтĕмлетĕве кăçалхи ака уйăхĕнче ЧР Министрсен Кабинетне пуçласа тăратрăм. Уполномоченнăй институчĕ мĕнлерех йĕркеленни, унăн тĕллевĕсем, вĕсене пурнăçламалли май, уполномоченнăй аппаратĕн ĕç меслечĕ, чи кирли – пайтаçăсене ура хуракан чăрмавсем, институтăн пирвайхи ырă ĕçĕсем, йывăрлăхсене епле пĕтерсе пыни çинчен туллин пĕлтертĕм. Манăн доклада РФ предпринимательсен прависене хӳтĕлекен уполномоченнăйне Борис Титова ярса панă. Унпа Раççей Президенчĕ Федераци Пухăвне янă Çырăва хатĕрленĕ чухне усă курнă.

Ĕçлĕ çынсен тумхахлă çулне предпринимательсемпе, вĕсен пĕрлĕхĕпе пĕрле тишкеретпĕр, çивĕч ыйтăвĕсемпе тӳре-шарана паллаштаратпăр. Налук тытнă, суд йышăну кăларнă чух бизнесменсен пайталăхне катертнине те, влаç органĕсемпе, вăл шутра тĕрĕслев-сăнав тытăмĕсемпе пĕрле ыйтусене пайтаçăсем майлă татса панине те халăха пĕлтерсе тăратăп.

**– Информацин йышлă хатĕрĕсемпе çыхăну тытатăр-и?**

– Ăна малтанах йĕркелерĕмĕр. Кунсăр пуçне пирĕн сайт пур. Вăл – влаç органĕсен официаллă порталĕнче. Унта /www.cap.ru, «Патшалăхăн ытти органĕ» пай/ хăвăра кирлĕ информаци тупатăр. Правасене, саккунлă пайталăха катертнĕ тĕк ман ятпа ыйту яма пултаратăр. Эпир Твиттерпа Фейсбук социаллă сетьсенче те пур. Вĕсемпе çыхăнма сĕнетĕп. Предпринимательсене ĕç пӳлĕмĕнче Шупашкарти Республика лапамĕнчи 2-мĕш çуртра кашни уйăхăн пĕрремĕш тата виççĕмĕш тунти кунĕнче 14-16 сехетсенче йышăнатăп. Йышăну пӳлĕмĕн телефонĕ: 8927-668-28-87. Кунсăр пуçне Чăваш Енри район-хулана çитсе усламçăсене уйрăммăн йышăнатăп.

**– ЧР предпринимательсен юхăмне вăйлатмалли, вĕсен пайталăхне хӳтĕлемелли тĕллеве палăртма тата ăна пурнăçа кĕртме мĕнле хутшăнатăр?**

– Мана республика Пуçлăхĕ çумĕнчи экономика тата инвестици политикин канашĕсен ĕçне явăçтараççĕ. Ларусенче инвестици хывассине, унăн проекчĕсене хаклассипе çыхăннă саккунсене улшăну-хушăм кĕртмешкĕн ялан сĕнме пултаратăп. Чăваш Ен, Раççей предпринимательлĕхне тӳрремĕнех пырса тивекен норматив-право акчĕсен проекчĕсене тĕпчетĕп, кирлĕ пулсан вĕсене улшăну-хушăм кĕртме сĕнетĕп. Уйрăммăн илсен хальхи вăхăтра ЧР Министрсен Кабинечĕн пĕчĕк тата вăтам бизнес оборудовани туянса курнă тăкакăн пĕр пайне саплаштарасси çинчен калакан йышăнăвĕн проектне тишкеретĕп. Унпа паллашма мĕн пур предпринимателе ярса патăм. Çак уйăхра ЧР Экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илӳ министерствинче ЧР Министрсен Кабинечĕн «Чăваш Республикинче алкоголь сутмалли вăхăта, вырăна тата меслете катертес тĕлĕшпе пурнăçламалли хушма ĕç çинчен» йышăнăвĕн проектне сӳтсе явма хутшăнтăм. Маншăн «предпринимательсене ĕçлеме, инвестици хывма ятарласа тата тивĕççĕртен чăрмав кӳме ирĕк паракан йĕркесем саккунĕнче пур-и?» текен ыйту тухса тăчĕ.

Тĕллевĕме пурнăçа кĕртессишĕн федерацин территори, республикăн ĕç тăвакан чылай органĕпе çыхăнса ĕçлесси çинчен килĕшӳ çирĕплетрĕм. РФ Налук службин республикăри управленийĕн специалисчĕсемпе тĕл пулса нумай ыйтăва тĕпчетпĕр. Тавăç пуçаракан бизнесменсен ыйтăвĕсене суда çитермесĕрех татса пама тăрăшатпăр.

**– Ĕçлĕ çыхăну мĕнле йĕркеленет?**

– ЧР патшалăх влаçĕпе муниципалитет органĕсен ертӳлĕхĕпе час-часах тĕл пулса усламçăсене пырса тивекен вун-вун ыйтăва сӳтсе яватăп. Район-хула администрацийĕсен, тĕрĕслев-сăнав органĕн пуçлăхĕсемпе, бизнесменсемпе тĕл пулатăп, предпринимательсене ĕçлеме чăрмантаракан тĕслĕхсене ыйтса пĕлетĕп. Пĕр пайне асăннă органсен пуçлăхĕнчен е специалисчĕсенчен канашлу пынă вăхăтра е иртнĕ хыççăн, теприне тĕп хулана таврăнсан çыру ярса тĕпчеме ыйтатăп. Хăш-пĕр ĕç вырăнти ертӳçĕсемпе тĕл пулса калаçнă хушăрах пурнăçланасси палăрать. Ыйтăва тишкерме экспертсене, юристсене, ытти специалиста явăçтарса, вырăна телефонпа шăнкăравласа бизнесменсене хӳтĕленĕ тĕслĕх те сахал мар.

Ĕçлĕ çынсен умне тухса тăракан чăрмавсене лайăхрах пĕлес тĕллевпе уполномоченнăй пулăшуçине пурĕ 10 район-хулара, вăл шутра Патăрьелпе Елчĕк енре, Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкарта çирĕплетрĕм. Пурăна киле хăйĕн вăйне, вăхăтне шеллемесĕр общество ĕçне хастар хутшăнакана кашни муниципалитетрах тупма тăрăшăпăр. ЧР Промышленноçпа суту-илӳ палатинче пайтаçăсен пĕр ушкăнĕпе тĕл пулса саккунсен улшăну-хушăм проекчĕсене хатĕрлерĕмĕр. Сăмахран, бизнесмен пушар хăрушлăхĕнчен хӳтĕленмелли йĕркене сĕмсĕррĕн пăсса тăкак кӳмен чух ăна çырса асăрхаттарнипех, çитменлĕхе пĕтерме вăхăт панипех çырлахмалла тесе шухăшлатăп. Çакна РФ Административлă право йĕркине пăсни çинчен калакан кодексĕнче çырса хума сĕнтĕм.

Тупăшран налук тытнă чух микрорайонта инженери инфратытăмне хывса куракан тăкака расхутсене кĕртессине саккунра пăхман. Хальлĕхе налукçăсем вĕсене тăкак вырăнне хурса шута илмеççĕ. Строительсен ĕçе хăйсен укçи-тенкипе тума тивет. Эпĕ çакăнпа килĕшместĕп. РФ Налук кодексне улшăну кĕртме сĕнтĕм. Пĕчĕк тата вăтам бизнесăн страхламалли тӳлевне пĕчĕклетме ыйтатăп. Унăн виçине ĕç укçи фончĕн 15-20 процентĕ чухлĕ çеç хăвармалла.

**– Усламçăсен правине хӳтĕлессишĕн тата мĕнле мелпе усă куратăр?**

– Суда тавăç тăратма, патшалăх органĕсем ирттерекен тĕрĕслеве хутшăнма, уголовлă ĕçпе, арбитражпа çыхăннă информаци ыйтса илме пултаратăп. Сăмахран, пĕр предприниматель хăйĕн организацине пынă налукçăсен йĕркеленĕ тĕрĕслеве хутшăнма ыйтрĕ – килĕшрĕм. Арбитраж сучĕ предпринимательсен ĕçне ларура пăхнă чух мана виççĕмĕш ен вырăнне явăçтарасси йăлана кĕчĕ. Темиçе уйăх каялла пайтаçа судра хӳтĕлеме май килчĕ. Тӳре ăна майлă йышăну кăларчĕ. Хальлĕхе çавнашкал тĕслĕх нумай мар. Ӳлĕм ытларах хӳтĕлĕпĕр. ЧР Адвокат палатипе те пĕрле çыхăнса ĕçлесси пирки килĕшӳ çирĕплетрĕм. Унăн юристчĕсем судра бизнесменсене хӳтĕлĕç. Вĕсем малашне вĕсене çеç мар, пурне те тӳлевсĕрех юридици канашĕ парасса шанатăп. Урапа вырăнтан тапранчĕ ĕнтĕ. Мана ваккатсем тӳлевсĕрех тĕревлĕççĕ. Елчĕк районĕнчи Елчĕк ялĕнчи предпринимателе вĕсем çине тĕренсе хӳтĕлеме тăрăшатпăр. Ку ĕçе эксперта явăçтартăм. Налук инспекцийĕ пайтаçă майлă йышăну кăларасса кĕтетпĕр. «Хыпар» хаçатпа усă курса ĕçлĕ çынсене Ленин проспекчĕнчи 2-мĕш «б» çуртри ЧР бизнес инкубаторĕнче Раççей Президенчĕ çумĕнчи предпринимательсен прависене хӳтĕлекен уполномоченнăйăн йышăну пӳлĕмĕ ĕçленине пĕлтеретĕп. Бизнесменсем унта бухгалтери, налук, ытти енĕпе канаш илме пултараççĕ.

**– Саккунпа килĕшӳллĕн федерацин территори, республика, муниципалитет органĕсем ыйтнине миçе эрнерен хурав памалла?**

– Вун пилĕк кун хушшинче. Эпĕ хăш чиновникран ыйтса çыру çырнă – çавăн хуравламалла. ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсем кăçалхи çĕртме уйăхĕнче ЧР Административлă право йĕркине пăсни çинчен калакан саккунне улшăну кĕртрĕç. Унпа килĕшӳллĕн мана ĕçлеме чăрмантарнăшăн тата должноçри çынсем эпĕ ыйтнă информацие вăхăтра тивĕçтерменшĕн – 1-2-шер пинлĕх, должноçри çынсем манăн саккунлă ыйтусене тивĕçтерменшĕн 2-3 пинлĕх штрафлама пултараççĕ. Кирлĕ пулсан эпĕ административлă ĕç те пуçарма пултаратăп.

**– Сире штатра тӳрремĕнех пулăшакан йышлă-и?**

– Уполномоченнăй аппаратчĕ пысăк мар: манăн пулăшуçă, икĕ консультант, специалист. Ку ушкăна ЧР саккунĕпе çирĕплетнĕ. Мана консультаци пулăшăвĕ пама обществăн эксперт канашне йĕркелесе çитерейменрĕм-ха. Кандидатсем пур. Вĕсене сӳтсе яватпăр.



■ **Юрий МИХАЙЛОВ**
**калаçнă**



# КРИМ

шы ав верс сем риминал приговорсе

2004 çулхи кăрлачăн 17-мĕшĕнче тухма пуçланă

**Алкоголь рынокĕ**

## "Акатуй" йĕрĕпе,

## е Чăваш лавккисенче чăваш эрехĕ мĕншĕн сахал, вăл мĕншĕн хаклă?

***Ял-хулара пулнă май ЧР Пуçлăхĕ лавккасенче Чăваш Енре туса кăларнă продукци тӳпи пĕчĕккишĕн час-часах кăмăлсăрланать те – Чăваш Республикинче йĕркелĕхе тивĕçтерес енĕпе ĕçлекен координаци канашĕн ĕнерхи ларăвĕн кун йĕркине алкоголь продукцийĕн çаврăнăшĕпе çыхăннă ыйтăва кĕртнине пĕлнĕ май журналистсем çивĕч калаçу пуласса малтанах тĕшмĕртнĕччĕ. Çапла пулчĕ те.***



Сăмаха Михаил Игнатьев нумай аптека çав-çавах «фанфуриксем» сутни пирки каланинчен пуçларĕ: «Аптекăсене ятарласа кĕретĕп те – мана та «фанфурик» сутрĕç. Паллах, вĕсен сутма ирĕк пур, анчах апла тумалла мар. Аптекăсем наркăмăша çывăх çав шĕвексене мар, эмелсем сутма тивĕç». Анчах чылайăшĕ услам тăвас тĕллевпе çакăн çине алă сулать. Тепĕр енчен, лавккасенче хамăр патра туса кăларнă алкоголь продукцийĕн тӳпи пĕчĕк. Сутаççĕ пулсан та – хамăрăн эрех-сăра тавар туянакансен куçĕ тĕлне тӳрех лекмелли сентресем çинче мар, е аялти, е ытла та çӳлти çӳлĕксем çинче. Çак тата ытти саманта пула акцизсен калăпăшĕ чакни палăрать. «300 млн тенкĕ çухатрăмăр. Çак укçа икĕ ача сачĕ тума çитетчĕ», – пăшăрханса палăртрĕ Михаил Васильевич.

Тĕлĕнмелле, анчах эпир шурă эрехĕн яланах чăвашăн шутланнă «Акатуй» брендне те çухатнă иккен. Çак ятлă эрехе Самарта кĕленчесене тултарма пуçланă. Анчах Шупашкарта ку эрехе «Чăваш Ен продукцийĕ» тесе сутаççĕ-мĕн. Чăн та, халь бренд каялла таврăннă теме юрать: «Акатуй» ятпа «Росспиртпром» тытăмне кĕрекен «Чебоксарский» ликерпа эрех завочĕ продукци тепĕр хут кăларма пуçланă. Çакна çирĕплетме экономика аталанăвĕн министрĕ Владимир Аврелькин пĕр кĕленчине ларăва та илсе килнĕ – ăна пухăннисене кăтартрĕ.

Владимир Александрович алкоголь çаврăнăшĕпе çыхăннă саккунсене пăснă фирмăсемпе компанисен ячĕсене асăнчĕ, вĕсене мĕнле явап тыттарнипе паллаштарчĕ. Кăçал республикăра суя маркăллă эрех тупса палăртасси чакнă-мĕн. Çак продукцие кӳрекенсем Чăваш Енре тивĕçлĕ органсем çине тăрса ĕçленине пĕлеççĕ – «пирĕн республикăран пăрănса иртеççĕ». Çынсем суррогатсемпе наркăмăшланнă тĕслĕхсем те 13% сахалланнă.

Министр лавккасенче хамăрăн эрех сахаллине унăн хакĕ пысăккипе сăлтавларĕ. Çур литрлă кĕленче хакĕ вăтамран 220-230 тенкĕпе танлашать, çав вăхăтрах ютран кӳрекен тĕслĕхсем 199 тенкĕлĕххисем те пайтах. Мĕншĕн çапла пулса тухать? Суту-илӳре завод хакне ӳстерекен хушăм пысăк – 17-рен пуçласа 30% таранах. Федерацин мар, хамăрăн, вырăнти шутланакан сетьсенче хайхи хушăм пушшех пысăк.

Тепĕр самант та пур. «Росспиртпром» Шупашкарти завод продукцине уйрăм компанисем урлă кăна курттăммăн сутма хистет иккен. Ку енĕпе «Максима» ТК» тата «Беркут 3000» ОООсем ĕçлеççĕ. Ларăва çав компанисен представителĕсене те чĕннĕ те – вĕсен ЧР Пуçлăхĕнчен кăмăллах мар сăмахсем илтме тиврĕ. Михаил Васильевич вĕсем Чăваш Енре пурăнни, ĕçлени çинчен каланă май патриотлăх туйăмĕ пулмалли, хамăрăн продукцие йӳнĕрех туса ăна ытларах сутма тăрăшмалли çинчен каларĕ.

Шупашкарти завод çулталăкра 1,4 млн декалитр эрех туса кăларма пултарать, анчах çак хăватăн çурри кăна ĕçлет. «Спирта ăçтан кӳретĕр?» – тӳррĕн ыйтрĕ Михаил Игнатьев. «Мордовирен, продукцие апат-çимĕç спиртĕнчен хатĕрлетпĕр – ГОСТпа килĕшӳллĕн. Кавказран спирт кӳместпĕр», – уçăмлă хурав пачĕ завод директорĕ Алексей Селиванов. Михаил Васильевич вара оптовиксем тĕлĕшпе пуçарнă ӳпкевлĕ сăмахне малалла тăсрĕ: «Завод хакĕ çумне 12-16% хушатпăр тетĕр. Чăваш Ен продукцийĕ тĕлĕшпе 3-5% кăна тăвăр та – пур пĕр тутă пулатăр. Халь вара чăваш эрехĕ хаклă теççĕ».

Темăна Монополипе кĕрешекен служба управленийĕн ертӳçи Вячеслав Борисов аталантарчĕ. Унăн шухăшĕпе – Шупашкарти завод продукцине «Максима» тата «Беркут» урлă кăна курттăммăн сутнинче конкуренцие хĕстерни те пулма пултарать. Оптовиксем йышлăрах пулсан пĕр-пĕринпе тупăшĕç те – хак чакасси куç кĕрет. Вăл çавăн пекех «Акатуй» бренд ютра пулнинче те «тӳрĕ кăмăллă мар конкуренци» сĕмне курать. Сăмах май, 2010 çулччен хайхи оптовиксем чылай ытларах пулнă, ун чухне вĕсем завод хакне ӳстерсе палăртнă хушăма та 6% шайĕнче кăна тытнă.

«Максима» менеджерĕ хушăма пысăк тунине «эпир реклама валли нумай укçа уйăратпăр, ытти тăкак та пур» тесе тӳрре кăларма тăчĕ-ха, анчах ЧР Пуçлăхĕ çакна йышăнмарĕ. Чăн та, Патшалăх Канашĕн вице-спикерĕ Олег Мешков хайхи оптовиксен хутне кĕчĕ теме юрать. Унăн шухăшĕпе – ликерпа эрех заводĕнчех хак пысăк, ăна чакарма тăрăшмалла. Çапла тусан лавккари хак та пĕчĕкленĕ.

Тĕрĕсех-тĕр: пĕрне хурласа теприне мухтани вырăнсăр – хамăрăн продукци сутăнассине анлăлатас ĕçе пурин те хăйсен тӳпине хывмалла. Ку енĕпе хак кăна мар, эрех пахалăхĕ, ытти самант та пĕлтерĕшлĕ – кĕленче илемлĕ пулни таранах. Сăмах май, Шупашкар эрехĕн савăчĕ кĕçех хăйĕн дизайнне улăштарма пултарать. Иван Моторин премьер çак кунсенче «Росспиртпром» ертӳçисемпе курнăçнă-мĕн, тĕл пулура Шупашкарта туса кăларакан алкоголь продукцине тултаракан кĕленчесен дизайнне улăштарасси пирки те калаçу пулнă.

Пурин те тӳпе хывмалла тенĕрен – вырăнсенчи влаçсем те айккинче юлма пултараймаççĕ. ЧР Пуçлăхĕ ларура Шупашкар пуçлăхне Леонид Черкесова ахальтен сăмах памарĕ ĕнтĕ. Леонид Ильич «сулахай» эрехпе, саккуна пăсакансемпе мĕнлерех кĕрешнипе паллаштарнă май 580 пин тенкĕлĕх штраф пирки каларĕ те – Михаил Васильевич тӳрех пӳлчĕ: «Çак сферăра миллиард-миллиард тенкĕ çаврăнать, эсир вара темиçе çĕр пин тенкĕлĕх штраф çинчен калаçатăр! Вĕсемпе хăвăр та çыхланнă-им – çакна çапла ăнланмалла-и? Ӳкĕтленипе кăна нимĕн те тăваймăпăр, çирĕп мерăсем йышăнмалла, унсăрăн çынсем пире шанма пăрахĕç».

Полици асăннă сферăра мĕнлерех ĕçлени çинчен ЧР ШĔМĕн ертӳçин тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Андрей Тимофеев каласа пачĕ. Çакнашкал ларусенчен пĕринче шалти ĕçсен органĕсене тиркевлĕрех сăмах тивнĕччĕ те – ку хутĕнче пакунлисем çине тăрсах ĕçленине Андрей Владимирович цифрăсемпе çирĕплетрĕ. Уголовлă кодексăн 238 статйипе кăна 43 преступление тупса палăртнă. Çавăн пекех тавар паллисемпе саккуна пăсса усă курнă тĕслĕхсене те тăрă шыв çине кăларнă. Сыщиксен ăнăçлă ĕçĕн кăтартăвĕсен шутĕнче – ютран йӳнĕ эрех кӳрсе ăна Шупашкарта, республикăн темиçе районĕнче сутассине анлăн йĕркеленĕ ушкăна сиенсĕрлетни. Унăн йышĕнчи 3 çын 10 млн тенкĕ ытла услам тунă-мĕн.

Нумаях пулмасть кăна республикăри алкоголь рынокĕ контрафакт йышши продукципе тулса ларнăччĕ. Ютра кĕленчине 40-50 тенкĕпе туянаççĕ те кунта чылай хаклăрахпа сутаççĕ. Паян рынок чылай тасарах, кирек мĕнле пулсан та саккунсăр алкоголь калăпăшĕ унчченхи мар – çапларах пĕтĕмлетӳ турĕ Андрей Владимирович. Çакăнпа темăна вĕçлеме те юратчĕ пуль, анчах Михаил Игнатьев полици ĕçĕ тĕлĕшпе пичкери пыла юрăхсăра кăларакан «пĕр кашăк тикĕт» тупрĕ – полицейскипе çыхăннă пăтăрмахлă ĕç-пуçпа кăсăкланчĕ. Андрей Тимофеев сăмах мĕн пирки пынине тӳрех ăнланчĕ – уççăн ăнлантарчĕ. Кăçалхи çĕртме уйăхĕн 5-мĕшĕнче Экономика аталанăвĕн министерстви пĕр лавккара эрех сутуилĕвĕн саккунлăхне тĕрĕсленĕ. Вĕсене вара никам та мар – Шалти ĕçсен министерствин сотрудникĕ чăрмантарма тăнă. «Объективлă служба тĕрĕслевĕ ирттертĕмĕр – çирĕп мерăсем йышăнтăмăр. Çапла хăтланнă сотрудник службăна туллин тивĕçтермест тесе палăртнă. Çавăн пекех асăннă территоришĕн яваплă участковăя та явап тыттарнă – лавккари йĕркесĕрлĕхе Экономика аталанăвĕн министерствинчен маларах асăрхаманшăн», – терĕ ШĔМ ертӳçи.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

• ➡ *6, 11, 12 стр.*

КРИМ

*Саккунлăх*

# Пĕр тĕвĕри хӳтлĕхпе яваплăх

***Саккунлăхпа право йĕркине сыхласси, граждансен прависене хӳтĕлесси – прокуратура органĕсен тивĕçне кĕскен çапларах палăртма пулать-тĕр. Чăннипех – анлă ĕç. Вăл мĕнле пурнăçланать – çакна курса хаклас тĕллевпе Шупашкарти Калинин районĕн прокуратуринче пултăмăр. Александр ТОЛСТОВ прокурор хаçат корреспондентне тараватйышăнчĕ, ăна пăхăнса тăракансем «ĕç вăрттăнлăхĕсемпе» паллаштарчĕç.***



## Коррупципе кĕрешни çинчен

Çĕр-шыв ертӳçисем коррупципе кĕрешесси право хуралĕн органĕсен ĕçĕнчи тĕп çул-йĕрсен шутĕнче пулнине аса илтерсех тăнине кура, паллах, прокуратура айккинче тăма пултараймасть. Çак кĕрешĕве йĕркелесе-ертсе пырать тени те вырăнлă. «Следстви ирттерместпĕр, – каласа парать прокурор çумĕ Евгений Алексеев, – анчах патшалăх тата муниципалитет служби çинчен калакан саккунсем мĕнле пурнăçланнине тĕрĕсленипе кăна та çырлахмастпăр. Тĕллевсен шутĕнче – коррупци палăрăмĕсене тăрă шыв çине кăларасси, ăна çуратакан сăлтавсемпе условисене кăкласси».

Çак ĕçĕн пĕр пайĕ – муниципалитет служащийĕсем хăйсен тупăшĕпе тата пурлăхĕпе çыхăннă кăтартусем панине тĕрĕслесси. Паллах, ку йĕркене пăсакансем пирки коррупционер тееймĕн, анчах пысăкки вак-тĕвекрен пуçланать вĕт.

> **Тĕрĕслевсем ирттерсе муниципалитетăн çичĕ служащийĕ хăйсен тупăшĕпе пурлăхне туллин кăтартманнине палăртнă. Пĕри вара, райадминистрацин территори пайĕн пуçлăхĕ, хăйĕн тăкакĕсем пирки отчет паман – çав тăкаксем юлашки виçĕ çулта унăн тупăшĕнчен 400 пин тенкĕ чухлĕ иртсе кайнă.**

Çавна май çичĕ служащие асăрхаттарнă, пай пуçлăхĕ тĕлĕшпе вара шанчăкран тухнă тесе ĕçрен хăтарас ыйту тăратнă. Чăн та, ĕç-пуç чиновнике должноçран хăтарасси патнех çитмен, вăл хăйĕн тăкакĕсемпе тупăшĕсем саккунлă пулнине документсемпе çирĕплетнине кура ăна та дисциплина енĕпе явап тыттарнă – выговор панă.

## ЖКХри йĕркесĕрлĕх çинчен

Ĕçĕн анлă тепĕр енĕ – пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхри саккунлăха тивĕçтересси. «Ку сферăра 2014 çулăн пĕрремĕш çурринче саккуна пăснин 83 тĕслĕхне тупса палăртнă, – калаçăва хутшăнать прокурор пулăшуçи Александр Тарапыгин. – 1 протест, 49 представлени çырнă. Должноçри 44 çынна – дисциплина енĕпе, 23 çынна административлă майпа явап тыттарнă».

Управляющи компанисем, ресурссемпе тивĕçтерекен организацисем хăйсен ĕçне çиелтен туни палăрать, тепĕр чухне правăна пăсни те тĕл пулать – вĕсен должноçри çыннисем çурт-йĕр хуçисен тата бюджетăн çурт-йĕрпе энергетика сферисене аталантармалли укçине айккине яраççĕ.

Çынсенчен тӳлев илес, унăн виçине тĕрĕс палăртас тĕлĕшпе çитменлĕхсем çине-çинех. Калăпăр, «Пик-1» ООО ăшă энергийĕшĕн хывмалли тӳлевне тĕрĕс мар палăртнă. Çакнашкаллине «Текстильщик» УК вара Çамрăксен урамĕнчи 1-мĕш çуртри пӳлĕмсен пĕтĕмĕшле лаптăкĕн кăтартăвĕсене хăй тĕллĕнех улăштарнă. Паллах, асăннă компанисен ертӳçисен явап тытма тивнĕ.

> **Çынсене «иккĕлле» квитанцисем панипе çыхăннă киревсĕр пулăм Калинин районĕнче те пур иккен. Унашкаллине Эгер бульварĕнчи 10-мĕш, Шумилов урамĕнчи 30-мĕш, Трактор тăвакансен проспекчĕнчи 33-мĕш, Пролетари урамĕнчи 25-мĕш çуртсенче тупса палăртнă. «Пик-1» ООО çапла хăтланнă.**

Çавна май Шумилов урамĕнчи 30-мĕш çуртра пурăнакансене коммуналлă пулăшу ĕçĕсем кӳмесĕрех квитанцисем панăшăн управляющи компани ертӳçи тĕлĕшпе административлă ĕç пуçарнă – штраф тӳлеттернĕ.

Çакнашкал йĕркесĕр лару-тăру хула çыннисен хушшинче социаллă çивĕчлĕх çуратнине кура прокуратура ку ĕç-пуçа тĕрĕслессине малалла тăсма шантарать.

ЖКХ сферинчи йĕркесĕрлĕх тĕслĕхĕсем пирки каланă май прокуратурăра «Новоюжный» ОООн 5 млн тенкĕ укçине, çак компани пăхса тăракан çуртсенче пурăнакансене 2013 çул пуçламăшĕнчех тавăрса памалла пулнăскере, «кĕсьене чикни» пирки пĕлтерчĕç. Район прокуратури уголовлă ĕç пуçарас ыйтăва татса памашкăн тĕрĕслев материалĕсене следстви органĕсене панă. «Çухалнă» укçана вара хваттерсен хуçисене тавăрса панă ĕнтĕ.

## Ĕçлекене тӳлемелли çинчен

Прокурор пулăшуçин Надежда Киркинăн та, ĕçлевпе çыхăннă саккунсене пурнăçланине сăнаса тăрассишĕн яваплăскерĕн, каласа памалли нумай: «Сăмахран, ĕçлекенсене вăхăтра шалу тӳлемен предприятисене тупса палăртас тĕллевпе халăха ĕçпе тивĕçтерекен центртан, налук инспекцийĕнчен, Пенси фондĕнчен хамăра кирлĕ информацие илессине йĕркелерĕмĕр, ытти тытăмпа тачă çыхăну тытса ĕçлетпĕр. Тата, паллах, прокуратурăна килекен çăхавсене тишкеретпĕр».

Тĕрĕслевсем – çине-çинех. Калăпăр, «Шупашкар» суту-илӳ комплексĕнче ĕçлекен чылай предприниматель – В.Ильина, Н.Фролова, М.Яковлева, М.Попова, Л.Морозова – асăннă йĕркене пăхăнманнине тăрă шыв çине кăларма пултарнă, вĕсем çынсене ĕçе йышăннине çирĕплетекен хушусем кăларман. Унашкаллине «Мега-Молл», «СЭВЕН» суту-илӳ комплексĕсенче те тупса палăртнă. Унта та саккуна пăснă предпринмательсен списокĕ самай вăрăм.

> **Ĕç паракансен çынсене ĕçе йышăннă чух обязательнăй йĕркепе килĕшӳ тумалла, ĕçе йышăннине хушупа çирĕплетмелле. Нумайăшĕ çакăн çине алă сулать. Нумайăшĕ ĕçшĕн тӳлемелли вăрттăн схемăсемпе усă курать.**

Шумилов урамĕнчи «Shock цена» лавккара вара миграци саккунне пăхăнманни палăрнă. Ширзад Шабхаз оглы Амиров предпринимателе арендăна панă пӳлĕмсенче Азербайджан гражданинĕ Орхан Хандар оглы Акберов кладовщикре ĕçленĕ иккен. Докуменчĕсене тĕрĕсленĕ те – унăн Раççейре ĕçлемелли ирĕк çукки çирĕпленнĕ. Саккунпа килĕшӳллĕн ĕç параканăн ют çĕр-шыв çыннисене ятарлă ирĕк пулсан кăна ĕçе явăçтарма юрать. Ку тĕслĕхре предприниматель асăннă требование уяман. Район прокуратури ун тĕлĕшпе КоАПăн 5.27 статйин 1-мĕш пайĕпе административлă правăна пăсни çинчен калакан ĕç пуçарнă.

## Çут çанталăк хӳтлĕх кĕтни çинчен

Çут çанталăка та саккун хӳтĕлет, апла тăк кунта та прокуратура валли ĕç пур. Вăрман сферинчи саккунсене мĕнле пурнăçланипе кăсăкланса йывăç-хăма сутакан организацисен ĕçне тĕпченĕ – хăйсен продукцине саккунпа килĕшӳллĕн туянни таранах тĕрĕсленĕ. Кунта та çитменлĕх чылай.

Прокурор пулăшуçи Екатерина Харитонова асăннă тĕслĕхсен шутĕнче – «Строительный двор» ООО пушар хăрушсăрлăхĕн тата ĕçлев саккунĕсене пăсни. Фирма директорĕн ячĕпе представлени çырнă.

Тепĕр тĕслĕх – Иккĕмĕш Пионер тата Гоголь урамĕсем хĕресленнĕ çĕрте çӳп-çап тăкмалли санкцилемен вырăн «тупăнни». Çĕр лаптăкĕ муниципалитет харпăрлăхĕнче пулнине кура кун пирки тĕп хула администрацийĕн пуçлăхĕн ячĕпе республика прокуратури урлă представлени çырма тивнĕ.

Çакнашкал тĕрĕслевсене гараж хуçалăхĕсен строительствипе эксплуатацийĕн дирекцине явăçтарса районти гараж кооперативĕсен территорийĕсенче те ирттернĕ. «Станкоремонт», «Станкоремонт-2», «Текма», «Южный» ГКсенче хытă каяшсем çаплипех сапаланса выртакан вырăнсене тупса палăртнă. Прокуратура хушша кĕнĕ хыççăн çак йĕркесĕрлĕхе пĕтернĕ, çийĕнчен должноçри виçĕ çынна дисциплина енĕпе явап тыттарнă.

Кăкшăм шывне пӳлсе тунă пĕвене те тĕрĕсленĕ. Шывра – тĕрлĕ каяш, таса мар. Куншăн «ЖКХпа тирпейлĕх управленийĕ» МБУ ертӳçин тивĕçĕсене пурнăçлаканăн явап тытма тивнĕ. Организацисем тавралăха сиенлĕ витĕм кӳнĕшĕн вăхăтра тӳлев хывнине тĕрĕсленĕ май вара «Хурт-хăмăр ĕрчетекен агентство» АУО тата «МП Таир» ООО енчĕке çӳхетме васкманнине тупса палăртнă. Агентствăн тĕп бухгалтерĕ тата ООО директорĕ пирки адмĕçсем пуçарнă, çак тытăмсен ертӳçисен ячĕпе çитменлĕхсене пĕтерме сĕнсе представленисем çырнă. Çут çанталăка сыхлассипе тата унăн пуянлăхĕпе усă курассипе çыхăннă сферăра кăçалхи кăрлач-çĕртме уйăхĕсенче саккунсене пăснă 19 тĕслĕхе тăрă шыв çине кăларнă.

## «Шурă вилĕме» пӳлесси çинчен

«Паллах, наркотик сутакансене тӳрремĕнех тупса палăртасси пирĕн тивĕç мар – ку енĕпе Наркотĕрĕслев службин управленийĕ, полици ĕçлеççĕ, – тет прокурорăн аслă пулăшуçи Владимир Федоров, – анчах тивĕçлĕ саккунсене мĕнле пурнăçланине тимлĕ тĕрĕслесе тăнине кура наркотиксен саккунсăр çаврăнăшĕпе кĕрешес ĕçе прокуратура та сумлă тӳпе хывни пирки иккĕленместĕп».

Çакна ĕçпе çирĕплетеççĕ темелле. 2014 çулăн пĕрремĕш çурринче полицин 2-мĕш тата 3-мĕш пайĕсем /Калинин районĕн территорийĕ/ наркотиксемпе çыхăннă 89 преступление регистрациленĕ. Апла тăк ку енĕпе ĕçлемелли куç кĕрет. Çав шутра – профилактика.

30-мĕш шкулта прекурсорсен çаврăнăшĕпе çыхăннă операцисене регистрацилемелли журнала кирлĕ пек тытса пыман. Çакнашкаллине 38-мĕш, 35-мĕш, 28-мĕш, 33-мĕш шкулсенче, 46-мĕш гимназире те тупса палăртнă.

Кăçал прокурор çумĕнчи наркотиксен саккунсăр çаврăнăшĕпе кĕрешес ыйтусемпе ĕçлекен ведомствăсен ĕç ушкăнĕн икĕ ларăвне ирттернĕ. Çав ларусен йышăнăвĕсемпе килĕшӳллĕн тĕрлĕ мероприяти йĕркеленĕ. Тĕслĕхрен, участковăйсене, Наркотĕрĕслев службин оперативникĕсене явăçтарса ирттернĕ рейдсен пĕлтерĕшĕ пысăк. Республика прокуратури пуçарнă «Ăçта вилĕм сутнине пĕлтер» акцие те хастар хутшăннă. Наркотик сутакансем пирки граждансенчен темиçе пĕлтерӳ те пулнă-мĕн – вĕсем тăрăх тивĕçлĕ мерăсем йышăннă.

> **Прокуратура тĕрĕслевсем ирттерсе 11-мĕш, 3-мĕш шкулсенче ачасемшĕн Интернетри наркотиклă ӳсен-тăран ӳстерме, çав наркăмăша хатĕрлеме вĕрентекен сайтсемпе, материалсемпе паллашас тĕлĕшпе чарусем пулманнине палăртнă. Куншăн шкулсен ертӳçисене явап тыттарнă.**

Хаçатăн перекетлĕ усă курмалли лаптăкĕнче прокуратурăн анлă ĕçĕн кашни енĕпе туллин паллаштараймăн. Çынсен прависене хӳтĕленипе çыхăннă тĕслĕхсенчен нумайăшĕ – уйрăм статья теми. Кашнинчех – çын шăпи, нуши-кулянăвĕ. Сăмахран, инвалидсен хутне кĕниех мĕнешкел пысăк пĕлтерĕшлĕ. Шăпа тени вĕсене ахаль те кӳрентернĕ, çийĕнчен пулăшма тивĕç çынсем тĕрев парасшăн мар. Ирĕксĕрех прокуратурăн хистеме тивет. А.Петрова /ят-шывне улăштарнă/ хăйĕн инвалид ывăлне санаторипе курорт путевки паманни пирки пĕлтернинех илер. Саккунпа килĕшӳллĕн – памалла, путевка валли федераци бюджетĕнчен укçа уйăраççĕ. Инвалид ача патшалăхăн социаллă пулăшăвĕпе усă курма тивĕç çынсен федераци регистрĕнче. Анчах ăна путевка паман. Прокуратурăн район судне тавăçпа тухма тивнĕ – ЧР Сывлăх сыхлавĕн министерствине ачана путевка партармашкăн ыйтнă. Суд йышăнăвне кĕтеççĕ-ха.

– Пирĕн ĕçе, тен, хăшĕсем асăрхамаççĕ те пуль, – пĕтĕмлетрĕ корреспондент курни-илтнине Александр Толстов прокурор, – анчах камăн саккунлă интересĕсене уяман, камăн прависене пăснă – вĕсен хутне кĕретпĕр, çав çынсем пирĕн хӳтлĕхе туяççĕ-кураççех. Чылай чухне пирĕн пата ытти çĕрте пулăшу-хӳтлĕх тупаймасан килеççĕ – вĕсен шанăçне тӳрре кăлармаллах, саккуна пăснисене вара явап тыттармалла. Çапла вара пирĕн ĕçре хӳтлĕхпе яваплăх пĕр тĕвĕре темелле. Çак ĕçе малашне те саккун çине таянса тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлама тăрăшăпăр.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

● ➡ *11, 12 стр.*

*Паян – суту-илӳре ĕçлекенсен кунĕ*

# «Лавккана кĕрсен унти хăтлăх кăмăла çĕклетĕр»

***Муркаш районĕнчи Мăн Сĕнтĕр райповĕ Чăвашпотребсоюз тытăмĕнче кăна мар, Раççейри Центрсоюзра та яланах кăтартуллисен йышĕнче пулнине нумай наград çирĕплетет. Вĕсене стена талккăшпех вырнаçтарнă та пурне асăнса тухма хаçат лаптăкĕ çитес çук. Çитмĕл тăхăр ял халăхĕн, 13 пин çыннăн кулленхи ыйтăвне тивĕçтерекен пултаруллă çак коллектив кал-кал ĕçлеме вĕренсе çитнĕ. Ял лавккинче-и, çăкăр пĕçерекенсем патĕнче-и е пылак шыв кăларакан цехра – производствăн кашни сыпăкĕнчех ĕç йĕрки-майне сехет механизмĕ пек хускатса янă та ыранхишĕн пăшăрханмастăн темелле. Çынсем яваплăха туяççĕ, каланине тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлаççĕ. Пĕр ĕмĕт-тĕллевпе пурăнакан туслă йыша ертсе пыма та çăмăлрах пулĕ. Халь РФ потребкооперацийĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăвашпотребсоюз правленийĕн Канашĕн членне, райпо пуçлăхне Л.П.МАЙКОВĂНА хăйне сăмах парар.***

Реклама

– Пирĕн ĕçе хаклани лайăх ĕнтĕ, – тет Людмила Петровна. – Çапах мăн кăмăлланас, ыттисем умĕнче пуçа каçăртас йăла çук пирĕн. Пурте ĕçлеççĕ. Элĕксем те, Сĕнтĕрвăррисем те, Етĕрнесем те вăл е ку кăтартупа мала ӳкнĕ. Халь çеç Шупашкартан ырă хыпар пĕлтерчĕç. ЧПС ертӳçи Валерий Михайлович Павлов алă пуснă хут илтĕмĕр. 2014 çулăн пĕрремĕш çур çулĕнче райпосем çамрăк выльăх тата чăх-чĕп туянса сутас енĕпе мĕнле ĕçленине тишкерсе тухнă. Элĕкпе Октябрьски райповĕсем тата Тăвай кооперативĕ пĕрремĕш вырăнта, эпир – иккĕмĕшсем. Эппин, кӳршĕсем вăй-хала шеллемеççĕ, çав вăхăтрах Мăн Сĕнтĕрсем те начар ĕçлемеççĕ.

**– Людмила Петровна, çулне илсен сирĕн райпо ыттисенчен аслăрах. Кăçал Муркаш райповĕ 90 тултарнине паллă турĕ, эсир вара пĕр ĕмĕр чикки урлă каçнă коллектив. Çак тапхăр кооператив тытăмĕнче пысăк улшăнусемпе палăрса юлнă.**

– Ĕлĕкхипе хальхине мĕн танлаштармалли. Ас тăватăп: ача чухне хуралтă евĕр пусăраннă пĕчĕк лавккана пылак ĕмкĕч илме, вĕт-шакăрăн чи юратнă çимĕçне – «петушок» тесе калатчĕç, кĕреттĕмĕр. Сивĕрех кунсенче кăмакана вутпа е çĕр кăмрăкĕпе хутса ăшăтатчĕç. Шала ултă-çичĕ çын кĕрсенех пӳлĕмре тăвăрччĕ. Канфечĕпе юнашар пуллине те купаласа хунă, çăнăхне те çавăнтах виçсе параççĕ...

Райпо коллективне Василий Алексеевич Колбасов чылай çул ăнăçлă ертсе пынă. Чыс та мухтав ăна.

Паян пирĕн ял лавккисен хăтлăхне курсан – кăмăл çĕкленет. Тăпăл-тăпăл çуртсене кирпĕчрен купаланă, газпа ăшăтаççĕ, шалта таса та çутă. Çак шая çитрĕмĕр пулсан суту-илӳ культурине ӳстересси çинчен манмалла мар. Канашлура е пухусенче час-часах аса илтеретĕп. Тавар туянма тĕрлĕ çын кĕрсе тухать, кăмăл-туйăмне кура пурне те юрама йывăр. Тархасшăн ан кӳрентерĕр, сăпайлăрах пулăр, тетĕп. Итлеççĕ, тăнлаççĕ пирĕн çынсем, çавăнпа шалăп пулманпа пĕрех.

Юлашки пилĕк çулта ялсенче киввисене юсаса çĕнĕ сăн кĕртес, çĕнĕ лавкка туса лартас енĕпе нумай ĕçлеме тиврĕ. Манăн çум – строительство ĕçне йĕркелекен Валерьян Сергеевич Иванов – тăрăшулăхне уйрăммăн палăртасшăн. Çуллен 15 миллион тенкĕ уйăратпăр аталанăва.

**– Ялти кооперацие автомагазин хатĕрĕсем çул хывни – ырă пулăм. Москакассинчи апат-çимĕç лавккинче чылай çимĕçе штрих-кодпа тивĕçтернĕ те – касса патĕнче черет çук. Ĕç хăвăртлăхĕ ӳсни куç кĕрет.**

– 55 суту-илӳ предприятийĕнчен 12-шĕнче çĕнĕ хатĕрсем вырнаçтартăмăр. Капла тавар туянакан та, кассир та улталанмасть. Çитес икĕ-виçĕ çулта автоматизаци тытăмне пур çĕрте те хута яратпăр.

Халăхшăн меллĕ пултăр тетпĕр-çке. Тĕслĕхрен, хуçалăхра кирлĕ япала сутакан пысăк лавкка пур пирĕн. Çавăнпа строительство материалĕсене пахалама ятарлă вырăн уйăрса тĕрĕс турăмăр. Пӳрт тăррине витмелли е пӳрт ăш-чиккине çапса илемлетмелли материалсене хăв тытса суйлатăн. Кирлех пулсан киле леçме транспорт уйăратпăр. Меллĕ вĕт, пурин те груз машини çук. Лавкка заведующийĕ Галина Анатольевна Еруханова пек ĕçе чунтан парăннă çынсем татах пур пирĕн. Сăмах май, 36 çул ытла ĕçлет вăл суту-илӳре, ăна Центрсоюзăн Хисеп хутне пачĕç.

Манăн пĕр шухăша палăртса хăварас килет. Союз арканнă, 90-мĕш çулсенчи арăш-пирĕшлĕхре колхоз-совхоз сапаланса кайнă саманара потребкооперации хăйĕн вăй-хăватне упраса хăварма пултарчĕ, ялта паян ун пек çирĕп те шанчăклă тытăм çук.

**– Тĕрĕсех калатăр. Куллен кирлĕ тавар сутнипе пĕрлех райпо халăхран аш-какай, тĕш тырă, пахча çимĕç нумай туянать-мĕн.**

– Пирĕн халăх ĕçлеме ӳркенмест. Хушма хуçалăхăн ытлашши продукцине сутса укçа мĕншĕн тăвас мар. 2013 çулта çынсенчен 105 тонна аш-какай, 1122 тонна сĕт, 38 тонна çĕр улми туяннă. Сиплĕ курăк нумай хатĕрленĕ. Кайăк-кĕшĕк туянса сутассипе малтисен ретĕнче пулнине маларах асăннăччĕ. Халăхран куллен виçĕ машина сĕт пухса çӳрет. Укçипе кашни эрнере татăлатпăр. Икĕ-виçĕ ĕне тытакан йышланчĕ, тăпăрчă туса сутни услам кӳрет.

Çăкăр, премĕк-печени, шушкă, сухари, пылак шыв цехĕсем 150 тĕрлĕ издели хатĕрлеççĕ, çак çимĕçсен пахалăхĕ хуларинчен пĕртте кая мар. Технологи оборудованине çĕнетсех пыратпăр, производство культури ӳсрĕ. Кондитера ятарласа вĕреннĕ специалистсем те пур пирĕн, хамăр вырăнта хатĕрленисем те ăсталăха туптаççĕ, аслисенчен вĕренеççĕ.

**– Хăвăр та кооперации институчĕн дипломне илсен тӳрех пуçлăха ларман вĕт. Шупашкар район хĕрĕ суту-илӳ картлашкипе майĕпен хăпарса пынă.**

– Шетмĕпуçĕнчи вăтам шкул хыççăн кооперации техникумне пĕтертĕм, унтан – институт. Малтанах ревизора илнĕччĕ мана. Каярахпа товароведа куçарчĕç, суту-илӳ уйрăмĕн заведующийĕ, райпо пуçлăхĕн çумĕ... 2003 çулта вара райпо канашне ертсе пыма шанчĕç.

Майковăна пит ырласа çырнине халăх тĕрĕс мар ăнланĕ. Çитĕнӳ никĕсне пирĕн маттур ĕçченсем хываççĕ. Калăпăр, кунта «Суту-илӳ тата пулăшу ĕçĕсен центрĕ» пур. Елена Анатольевна Одинцова – çав тери кăмăллă хĕрарăм. Потребкооперацире 1980 çултанпа вăл. Килен-каянпа тараватъ. Кама мĕн кирлине пĕлсех тăрать тейĕн. Çуллахи уйăхсем – стройкăн хĕрӳ тапхăрĕ. Стена çыпăçтармалли е сăрламалли мĕнле материал туянсан аванрах тесе килеççĕ те кашнин ыйтăвне тивĕçтерет. Москакассинчи лавкка çĕнĕлле ĕçлени çинчен каларăмăр. Хастар, ӳркенмен йыш. Кăçалах Калмăкасси ялĕнче автоматизаци хатĕрĕсем вырнаçтаратпăр. Шупуçĕнчи лавккана Роза Калистратовна Киселева ертсе пырать. Тавар çаврăнăш калăпăшне ӳстерессишĕн ырми-канми тăрăшаççĕ. Нумай пулмасть иртнĕ Акатуйра Киселевăна ЧПСăн Хисеп хучĕпе чысларĕç.

**– Суйласа илнĕ профессие чунтан парăннисене хавхалантарни аван ĕнтĕ. Ытти мĕнле майсемпе усă куратăр?**

– Санаторисене яратпăр. Сирĕнпе каласса ларнă хушăра профком председателĕ Алина Волкова кĕрсе тухрĕ. Пĕлетĕр-и, кооперацири чи хитре пикесен конкурсĕнче çĕнтерӳçĕсен шутне кĕме пултарчĕ чăваш хĕрĕ. Унăн шукăль тумĕ, хăйне сцена çинче килĕшӳллĕ тыткалани пурне те кăмăла кайнă. Алина юрă-ташăра ăста. Кану каçĕсемпе уявсене тĕплĕ хатĕрлесе иртterет.

Ялта пурăнаканăн тĕнчене тухса çӳреме вăхăчĕ çукрах. Пахча, выльăх-чĕрлĕх тата ыт.те. Çу вăхăчĕ сутуçăсемшĕн те питĕ ĕçлĕ тапхăр. Кĕр енне кăштах пушанаççĕ. Çирĕм пилĕк çынна Сочири санаторире канса сипленме ӳкĕте кĕртрĕмĕр. Чиперех кайса килчĕç. Тав тăваççĕ, ара, хăшĕ-пĕри кăнтăрта пĕрремĕш хут, тинĕсре те пуçласа ишсе киленнĕ. «Чăваш Ен» санаторире те сывлăха çирĕплетеççĕ. Путевкăсен хакĕн 20 процентне çеç тӳлеççĕ çынсем, ыттине хамăр саплаштаратпăр.

Ыр кăмăллăх – райпо ĕçĕн уйрăлми пайĕ. Сахал тупăшлă çемьере ӳсекен е тăлăх çитĕнекен ачасем валли çуллен Çĕнĕ çул ёлки йĕркелесси йăлана кĕчĕ. Кашнине пĕчĕк парне, кучченеç çыххи паратпăр. Вĕт-шакăр пит-куçĕ епле савăнăçпа тулса çиçнине курасчĕ сирĕн. Вĕсем аслисен чун ăшшине туйса илчĕç. Питĕ хумхануллă та савăк самантсем чĕрине кĕрсе вырнаçаççĕ.

Çакнашкал уявсене паллă артистсене чĕнетпĕр. Сценине хамăр вăйпа капăрлататпăр. Пĕр тикĕс ĕçлесе пыракан 360 çынлă йыш канăвне йĕркелес тĕлĕшпе хăш-пĕр опыт пур. Ырă тĕслĕх кăтартакансене халăх умне кăларса чыслани пысăк пĕлтерĕшлĕ. Акă потребкооперации ветеранĕ, общество апатланăвĕн предприятийĕсен бухгалтерĕ Римма Аркадьевна Яковлева пирки ăшă сăмах нумай каларĕç. Хисепе тивĕçлисене ятран асăнмаллах. Сăмахран, водительсем çине пысăк ĕç тиенет. Андриян Александрович Тойбарсов, Иннокентий Гурьевич Галкин, Михаил Владимирович Симаков тата ыттисем çула тухма яланах хатĕр, техникăна аван пăхса тăраççĕ. Шанчăклă çынсем.

Самантпа усă курса эпĕ потребкооперации ĕçченĕсене ырлăх-сывлăх, телей, çемьере тату пурнăç, тивлетлĕх сунасшăн, шухăшланă ĕмĕтĕрсем пурнăçланччăр. Ĕçĕр-хĕлĕр ăнса пытăр.

**Вячеслав ГРИГОРЬЕВ çырса илнĕ**






• Район 100 çулхи юбилейне паллă тунă самант.



# Хĕрарăмсен масарне тĕпчеççĕ

***Мăньял Хапăс тата Пăртас ялĕсен икĕ çырми хушшинчи ансăр сăмсахра археологсем ĕçлени пирки "Хыпарта" пĕлтернĕччĕ. Вĕсем авалхи Мăньял Хапăс масарĕ ят панă археологи палăкне тĕпчеççĕ.***

Кăçал ку ĕçе Мордва педагогика институчĕн студенчĕсене те явăçтарнă. Масарта мордвасен мăн аслашшĕсен пулма пултарнă япаласемпе эрешсене тупнă. Сулăсем, мăй çыххисем, пăхăртан тунă çамка эрешĕсем Пенза облаçĕнче тĕпченĕ авалхи мордвасен масарĕнче асăрханă япаласене çывăх.

Археологсем тĕпчекен II-III ĕмĕрсенчи масарта хĕрарăмсене кăна пытарнă. Пурĕ – 41 вил тăпри. 34-мĕшĕнче тăм савăт, пăхăр тăхапа тата ункăсемпе илемлетнĕ пуçа тăхăнмалли хатĕр тупнă. Вăл йывăç хуппи хӳттинче выртнăран аван упраннă. Археологсем тĕлĕнтермĕш асăрханă: калпак çумĕнче хĕрарăмăн çӳçĕ сыхланса юлнă. Кăкăр тĕлĕнче çаврака бронза шăранчăкĕнчен тунă çаврака тăха тупнă. Хăш-пĕр шăмă пайĕ те бронза татăкĕсен айĕнче выртнăран аван упраннă. Хĕрарăмăн урине сандали евĕр пушмак тăхăнтартнă. Çакна сăран пӳшкĕн /ремешок/ тата бронза татăккисем çирĕплетеççĕ.

Хĕрарăмăн обществăри вырăнне эрешсен хисепĕ тата тăм савăт калăпăшĕ /пуянсен – пысăкрах, ыттисен – пĕчĕкрех/ кăтартать. Мĕн чухлĕ ытларах эреш хунă, вилене çавăн чухлĕ тарăнрах пытарнă.

"Мăньял Хапăс çывăхĕнчи авалхи масарта тупнă археологи материалĕсем – истори пĕлтерĕшлĕ питĕ хаклă япаласем", – тет Вăрнар музейĕн директорĕ Елена Шарипова. Вĕсем Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче упранĕç. Вăрнар музейĕн фондĕнче студентсен фотоотчечĕсем вырăн тупĕç. Тата Мордва педагогика институчĕн студентки Алена Любимкина ӳкерчĕксем парнелеме шантарнă. Вăл тимĕр ĕмĕрĕнче пурăннă хĕрарăмăн пуçа тăхăнмалли хатĕрне ăсталама ĕмĕтленет.

**И.СЕРГЕЕВА.**



*Уяв*

# Çемьере – виçĕ моряк

***Çапла, Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуçра пурăнакан Сорокинсен çемйинче виçĕ моряк.***

Çемье пуçĕпе Василий Алексеевичпа вăталăх ывăлĕ Владимир Балтика флотĕнче хĕсметре тăнă. Паллах, Василий Сорокинăн тинĕсре ывăлĕсенчен ытларах – тăватă çул – ишме тивнĕ. «Тухса каяттăмăр та 4-5 уйăхшар çĕр курмастăмăр»,– аса илет халĕ кил хуçи.

Владимир вара, И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн физикăпа математика факультетне пĕтернĕскер, тинĕс флотĕнче çулталăк кăна пулнă. Апла пулин те пуçарулăхĕпе тата хастарлăхĕпе палăрнăшăн наградăсене те тивĕçнĕ.



• *Александр, Василий тата Владимир Сорокинсем.*

Çемьере чи кĕçĕнни – Александр – Президент карапĕ çине /«Петр Великий»/ лекнĕ. Сорокинсемшĕн Тинĕс-çар флочĕн кунĕ – чи юратнă уявсенчен пĕри. Çак кун вĕсем шашлăк пĕçереççĕ е Шупашкара Атăл хĕррине, моряксемпе тĕл пулма каяççĕ.

**Р.АНАТОЛЬЕВА.**

*Çитĕнӳ*

# Хут купăс сумĕ чакман-ха




***«Выля, хут купăс!» центр тата Анастасия Заволокина чĕннипе Элĕк районĕнчи «Валинкке» халăх фольклор ансамблĕ Г.Заволокин ячĕллĕ Пĕтĕм тĕнчери III "Выля, хут купăс!" фестивале хутшăнчĕ. Унтан пысăк çитĕнӳпе таврăнчĕ.***

Фестиваль Новосибирск хулинче тата облаçĕнче иртнĕ. Вăл халăхсен хушшинчи проект шутланать, ăна икĕ çулта пĕрре йĕркелеççĕ. Хут купăс халăхсен туслăхне çирĕплетет. Çакна фестивале Раççейĕн 70 регионĕнчен 300 яхăн ансамбльпе юрăç хутшăнни, Германирен, Америкăран, Израильтен, Украинăран, Беларуçрен, Казахстанран хăнасем килни те çирĕплетет.

Чăваш Республикин чысне Элĕк районĕнчи "Валинкке" тата Шупашкар районĕнчи "Хĕлхем" коллективсем хӳтĕленĕ. "Валинкке" тăван халăхăн пултарулăхне, чăваш çĕрĕн пуянлăхне кăтартакан хайлавсемпе куракансен умне тухнă. Чăваш Ен коллективĕ Верх-Ирмень ялĕнчи культура çурчĕн, фестивалĕн пысăк сценисем çинче, "Заволокин ялĕнчи" лапамсенче, Новосибирск патшалăх техника университечĕн кану базинче пултарулăхĕпе паллаштарнă. Чуна пырса тивекен чăваш юррисем хут купăс сассипе килĕшӳллĕн янăраса куракансен кăмăлне тыткăнланă, чăваш халăхĕн тĕнче курăмĕн хăйне евĕрлĕхне кăтартса панă.

"Валинкке" халăх фольклор ансамблĕ – "Выля, хут купăс!" фестиваль лауреачĕ, Владимир Терентьев тата Галина Краснова юрăçсем дипломант пулса тăван тăрăха таврăннă. Çĕнтерӳçĕсене çавăн пекех хаклă парнесемпе савăнтарнă.

**О.ПЕТРОВ**

# Ялта стадион уçрĕç

***Комсомольски районĕнчи Янкасси ялĕнчи яшсем футболла выляма юратаççĕ. Çакна шута илсе вĕсем валли стадион турĕç, ăна «Патвар» ят пачĕç.***

Пĕтĕм тĕнчери арçынсемшĕн футбол – спортăн чи килĕшекен тĕсĕ. Çулталăкăн кирек хăш тапхăрĕнче, тикĕс лаптăкра пуçтарăнса мечĕке пĕр-пĕринчен туртса илсе, вăл е ку вылявçа хыçала хăварса хапхаран тапса кĕртетĕн.

Бразилире Пĕтĕм тĕнчен футбол чемпионачĕ пынă кунсенче Хирти Сĕнтĕр ял тăрăхĕнче çак вăйăпа пушшех кăсăкланчĕç. Арçынсем телевизор умĕнчен каймарĕç. Раççей чемпионачĕн вăййине кăтартнă чух сенкер экран çине пачах куç ӳкермен хĕрарăмсем те çĕр улми шуратнă май вăл е ку матч пынă вăхăтра телевизор еннелле пăха-пăха илчĕç.

Утă уйăхĕн 10-мĕшĕнче стадиона савăнăçлă лару-тăрура уçрĕç. Вун пилĕк çула çитичченхи ачасен хушшинче футбол ăмăртăвĕ иртрĕ. Унта Нĕркеç ялĕн икĕ ушкăнĕ, Хирти Сĕнтĕр, Çĕнĕ Кипеç, Янкасси, Елчĕк районĕнчи Аслă Пăла Тимеш ялĕсен командисем хутшăнчĕç. Çамрăк футболистсене Нĕркеçри культура çурчĕн директорĕ Михаил Кузнецов, турнира йĕркеленĕ пĕр тăван Николай, Владимир, Александр Черновсем саламларĕç.

Янкассисем ăста вылярĕç, хăйсене хирĕççисен хапхине чи нумай мечĕк тапса кĕртсе çĕнтерчĕç. Иккĕмĕш вырăнта – Аслă Пăла Тимешсем, виççĕмĕшĕнче – Хирти Сĕнтĕрсем. Хапхана тăрăшса хӳтĕленĕшĕн – Никита Иванова, малалла хăвăрт ыткăнса хирĕççисен вылявçисене улталама пĕлнĕшĕн – Федор Демидова, хапхана ăнăçлă хӳтĕлеме хутшăннăшăн Алексей Светлова, хăйĕнчен аслăраххисемпе тан выляма тăрăшнăшăн çичĕ çулти Денис Гладкова хавхалантарчĕç. Çĕнтерӳçĕ тата малти вырăнсене йышăннă командăсем Хисеп хутне, медале, парнене тивĕçрĕç.

**Сергей ПЕТРОВ**

**02 служба**

# Юхан шыв полицийĕ тимлĕ те сыхă



*Утă уйăхĕн 25-мĕшĕнче шыв çинчи полици хăйĕн уявне паллă турĕ – шыв транспорчĕ çинчи шалти ĕçсен органĕсене туса хунăранпа 96 çул çитрĕ.*

Тĕрĕссипе, юхан шыв полицийĕн подразделенийĕсене Раççейре 1876 çултах йĕркеленĕ. Анчах революци хыççăнхи çулсенче юхан шыв транспорчĕ çинчи шалти ĕçсен органĕсене 1918 çулхи утă уйăхĕн 25-мĕшĕнче туса хунă тесе йышăннă – çав кун Халăх комиссарĕсен канашĕ юхан шыв милицине йĕркелесси çинчен калакан декрета алă пуснă.

1998 çулта пирĕн республикăра чукун çул, шыв çинчи тата сывлăшри милици, шыв çинчи транспорт уйрăмне пĕрлештернĕ хыççăн шалти ĕçсен транспорт çинчи Чăваш лини пайĕ Атăл-Вятка управленийĕн тытăмне кĕнĕ.

Паян полицин лини пайĕ Шупашкар хулинчи юхан шыв портĕнче общество йĕркине сыхлать, граждансен хăрушсăрлăхне тивĕçтерет. Унăн яваплăхĕн территорийĕ анлă: Атăл тăрăх Чул хула облаçĕнчи Хмелевка ялĕнчен тытăнса Мари Элти Волжск пристанĕ таран – 191 км, Сăр тăрăх Медяно шывĕ Атăла юхса кĕрекен вырăн таран – 177 км. Çапла вара карапсем çÿрекен 318 км тăршшĕ юхан шыв.

Самай пысăк порт та чылай: Козьмодемьянск, Шупашкар, Звенигово, Етĕрне; Юрино, Çĕнĕ Шупашкар, Кокшайск, Сĕнтĕрвăрри пристанĕсем. Тата – Шупашкар ГЭСĕн территорийĕ. Подразделенисен сотрудникĕсем хăйсен участокĕсенче куллен пулаççĕ. Сăмах май, шыв çинчи полици подразделенийĕсем йышлă мар – лини пункчĕсем Çĕнĕ Шупашкарта, Етĕрнере, Козьмодемьянскра тата Звениговăра кăна.

Çуркуннерен тытăнса кĕркунне навигаци вĕçлениччен – чăннипех хĕрÿ тапхăр. Полицейскисен тивĕçĕ портсемпе пристаньсенче йĕркелĕхе тивĕçтересси кăна мар, пассажирсене илсе çÿрекен теплоходсем тĕлĕшпе те тимлĕ – пакунлисем çав карапсем çинче те ĕçлеççĕ. Навигаци пуçлансан шыв транспорчĕн объекчĕсем çинче ĕç нумайланасса кĕтсех тăр. Теплоходсем, паром каçасем – пурне те тимлĕх кирлĕ. Шупашкарти юхан шыв порчĕ хула çыннисемшĕн кану вырăнĕ пулса тăнă, апла тăк кунта халăх йышлă – куçран вĕçертме юрамасть. Çавăнпах портри наряд йышне 30-40% ÿстернĕ.

Çуллахи тапхăрта шыври биоресурссене саккуна пăсса тытассипе çине тăрса кĕрешме тивет. Ака уйăхĕн 10-мĕшĕнчен республика территорийĕнче тĕрлĕ йышши хатĕрпе биоресурссене /мĕн пур йышши пулла тата рак йышши чĕр чунсене/ тытма чарнăччĕ. Вăлтапа кăна тытма юрать, вăлта йĕпписен шутне те виçеллĕ тунă – çын пуçне иккĕрен ытла пулмалла мар.

Чару икĕ уйăх вăйра пулчĕ – çĕртме уйăхĕн 10-мĕшĕччен. Çавна май транспорт полицийĕн сотрудникĕсем пулă вăлча сапма куçакан çулсем çинче, вăлча сапакан вырăнсенче йĕркене пăсасран асăрханас тĕлĕшпе тимлĕ ĕçленĕ. Саккуна пăсса пулă тытнин 244 тĕслĕхне тупса палăртнă. Çав шутра уголовлă майпа явап тыттармалли тĕслĕхсем – 31, административлă правăна пăсни – 213. Полицин браконьерсемпе кĕрешмешкĕн паян пысăк хăвăртлăхлă NorthSilver Pro 560 Jet катер та пур. Лини пайĕн массăллă информаци хатĕрĕсемпе çыхăну тытакан инспекторĕ Светлана Егорова пĕлтернĕ тăрăх – çак катерăн двигатель хăвачĕ 200 лаша вăйĕпе танлашать, шыври сехетри хăвăртлăха вăл 75 км çитерме пултарать. Çапла вара рейдсене тухакан йыша пысăк пулăшу кÿрет: шыв çинчи йĕркене пăсакансене хăваласа çитес, тытса чарас енĕпе чăннипех меллĕ.

Тепĕр тесен юхан шыв полицийĕн сотрудникĕсен ытти ĕç те пайтах. Кăçалхи 6 уйăхра Шупашкар портĕнче кăна тĕрлĕ пăтăрмахпа преступлени пирки 200 ытла заявлени йышăннă. Регистрациленĕ преступленисен шутĕнче – наркотиксен тата хĕç-пăшалăн саккунсăр çаврăнăшĕ те, ют укçана хапсăнни те, ытти те. Лини пайĕн ертÿçисем палăртнă тăрăх – подразделенисен яваплăхĕн зонинче йĕркелĕхпе хăрушсăрлăха кирлĕ пек тивĕçтернĕ, лару-тăрушăн тăнăçлăх кăтартуллă. Преступленисен шучĕ чакни те палăрать.

■ **Николай АНТИПОВ**

**Асăрханăр!**

# Криминал "ăслă технологисемпе" хĕç-пăшалланать

***Ултавçăсем банксен пысăк технологийĕсен меллĕ механизмĕсемпе, Интернет майĕсемпе ытларах та ытларах усă курни куç кĕрет. Вĕсем паян сирĕнпе курнăçмасса та пултараççĕ – виртуаллă майсемпе усă курсах ют укçана вăрлаççĕ. Çакнашкал тĕслĕхсем – çине-çинех.***

Шупашкар полицийĕнчен 41 çулти арçын пулăшу ыйтнă. Унăн банк карточки çинчи укçи çухалнă иккен. Мĕн пулнă-ха? Каçхине çак арçын укçи упранакан банк сайтне кĕнĕ – хăйĕн шутне тĕрĕслес тенĕ. Анчах сайтри темле чăрмавсене пула çав страничкăна кĕреймен. Кăштахран телефон янăраса кайнă – паллă мар номер. Линин леш вĕçĕнчи çын хăйĕнпе банкăн ятарлă службин сотрудникĕ тесе паллаштарнă, банк сайтне хакерсем çĕмĕрни çинчен пĕлтернĕ. Ултавçăсем клиент шутĕнчи укçана хапсăнасран сыхланма хайхи карточкăна блокировка тумалламĕн. Кун валли банкăн официаллă страничкинчи кода кĕртмелле. Шупашкар çынни «банкир» сĕнĕве пурнăçланă кăна – тепĕр самантран унăн телефонĕ çине банкри шут çинчи 62 пин тенкĕ урăх çĕре куçни пирки хыпар çитнĕ.

Шалти ĕçсен министерствин «К» пайĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Валерий Чернов каланă тăрăх – ултавçăсем çакнашкал мелпе усă кураççĕ. Вăрра шыраççĕ-ха, ыттисен вара асра тытмалла: банксем вăл е ку операцие пурнăçлама нихăçан та парольсемпе пин-кодсене ыйтмаççĕ. Сирĕнпе çакнашкал сĕнÿпе телефонпа çыхăнчĕç тĕк – банкăн «хĕрÿ лини» номерĕпе шăнкăравлăр, сирĕн шут тĕлĕшпе чăннипех чăрмавсем пурри-çуккипе кăсăкланма ан ÿркенĕр.

Тепĕр тĕслĕхре те ĕç-пуç Интернетпа, банк карточкипе çыхăннă. 33 çулти хĕрарăм улталаннă. Çухатăвĕ темле пысăк мар – 5 пин тенкĕ, анчах çакă та, килĕшетĕр пуль, кÿренмелле.

Хĕрарăм полицейскисене каласа панă тăрăх – вăл Интернетри сайтсенчен пĕринче шкаф-стенка сутасси пирки пĕлтерÿ панă. Кĕçех пĕр арçын шăнкăравланă – сĕтел-пукана туянасшăн-мĕн. Хăй кунтисем мар, Тутарстанра пурăнать иккен – аванс шучĕпе шкафшăн хĕрарăмăн банкри шучĕ çине укçан пĕр пайне куçарма хирĕç мар. Çапла тумашкăн арçын хĕрарăмран банк карточкин номерне, вăл хăçанччен вăйра тăнине тата карточкăн тÿнтер енче палăртнă виçĕ цифраллă номере ыйтнă. Тепĕртакран банкран пароле пĕлтерекен СМС-пĕлтерÿ килнĕ. Ăна хĕрарăм хайхи «тавар туянакана» пĕлтернĕ. Çакăн хыççăнах унăн шучĕ çинчен 5 пин тенкĕ «пăсланнă».

Ку тĕслĕх тĕлĕшпе те Валерий Чернов комментари пачĕ. Вăл ăнлантарнă тăрăх – хальхи вăхăтра банк сферинче банкоматран карточкăсăрах укçа илмелли пулăшу ĕçĕ пур. Çапла тумашкăн банк учрежденийĕн тĕп офисне шăнкăравламалла та хăвăн кăтартăвусене тата карточкăн номерне пĕлтермелле. Кун хыççăн кĕсье телефонĕ çине пин-код кăтартакан СМС-пĕлтерÿ килет. Малалли – питĕ ансат. Кода çыратăн та – укçа илетĕн. Хĕрарăм шăпах çак меле лайăх пĕлекен ултавçăсен мăшкăлĕ пулнă. Апла тăк банк карточкипе усă куракансен пин-кода тата карточкăн тÿнтер енчи цифрăсене никама та пĕлтерме юрамасть.

Шупашкарти 30 çулти арçын та Интернетри пĕр сайтра пĕлтерÿ панă хыççăн ултавçă вăлтине çакланнă. Ку тĕслĕхре кравать сутас тенĕ. Туянас кăмăллă арçын шăнкăравланă. Вăл та карточка çине халех укçа куçарма хатĕр иккен. Кравате вара каçхине грузчиксем пырса илĕç.

«Клиент» кравать хуçине банкомат патне пырса хăй асăнакан цифрăсене çырма сĕннĕ – арçын çапла тунă та. Кĕçех унăн телефонĕ çине банкран пĕлтерÿ килнĕ – пароль. Ăна кравать туянас кăмăллă çынна пĕлтернĕ. Çук, кравать сутăнман, карточка çине укçа та куçман, анчах банкри шутран 230 пин тенкĕ çухалнă.

Кĕскен калас тăк – çÿлерех паллаштарнă сценариех. Полици ултавçă усă курнă телефон номерне Кемĕр облаçĕнче регистрациленине палăртнă. Преступнике тупайĕç-и – шанса пĕтерме хĕн. Ку тĕслĕх те ыттисемшĕн урок пулма тивĕç. Полици çирĕплетнĕ тăрăх – çын çакнашкал ултав вăлтине лексен унăн банкăн çывăхри уйрăмне çитмелле, банк специалисчĕсем пулăшнипе укçа куçарăвĕн транзакцине пăрахăçламашкăн вăхăт питĕ сахал – пĕр сехетрен ытла мар. Кая юлтăн – укçа çухалчĕ.

■ **Николай ДМИТРИЕВ**

**Коррупци**

# Контрактра – хакли, чăннипе вара – йÿнни

***Республика прокуратури коррупципе кĕрешнин çулталăкăн пĕрремĕш çурринчи кăтартăвĕсене пĕтĕмлетнĕ. Вĕсемпе пире коррупципе кĕрешесси çинчен калакан саккунсене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе тăракан пай пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Валерий МИХАЙЛОВ паллаштарчĕ.***

Тĕрĕслевсем ирттернĕ май патшалăх тата муниципалитет службис, коррупципе кĕрешесси çинчен калакан саккунсене пăснă 1463 тĕслĕхе тупса палăртнă. Çитменлĕхсене пĕтерме 554 представлени тăратнă, вĕсене тишкерсе должноçри 374 çынна дисциплина енĕпе явап тыттарнă. Саккунсăр право акчĕсем тĕлĕшпе 338 протест çырнă, прокурорсен йышăнăвĕсем тăрăх 15 çынна административлă майпа явап тыттарнă, суда 38 заявлени панă. Прокуратурăсен материалĕсене тĕпе хурса уголовлă 17 ĕç пуçарнă.

В.Михайлов палăртнă тăрăх – патшалăх тата муниципалитет службис çинчен калакан саккунсенчи чарусене пăхăнман, тивĕçсене пурнăçламан тĕслĕхсем кăна – 383. Калăпăр, Красноармейски районĕн прокуратури Карай ял тăрăхĕн администрацийĕн муниципалитет служащийĕ уйрăм предприниматель патĕнче те ĕçленине тупса палăртнă – хуралçăра тăрăшнă иккен. Çакăн çинчен администрацие çырса асăрхаттарман.

Тăвай районĕнче полномочиллĕ çын интерессен хирĕç тăрăвне сирсе яма мерăсем йышăнман. Унта полици участковăйĕ профилактика енĕпе шутра тăракансене административлă майпа сăнаса тăнă май вĕсене хăйĕн тĕллевĕпе усă куракан çĕр лаптăкĕсем çинче ĕçлеттернĕ. Çакăн пирки вырăнти шалти ĕçсен пайĕн ячĕпе представлени çырнă, çавăн пекех процесс тĕрĕслевĕ ирттерме материалсем ярса панă.

Патшалăх тата муниципалитет нушисем валли саккассем вырнаçтарас енĕпе саккуна пăснин 116 тĕслĕхне шута илнĕ. Протестсем, представленисем çырнисĕр пуçне 51 çынна – дисциплина енĕпе, 9 çынна административлă майпа явап тыттарнă. Ку çеç те мар – прокуратура панă тăватă материал тăрăх уголовлă ĕçсем пуçарнă.

Сăмахран, Патăрьел районĕнче «Шыгырданы» ТПК» ООО райцентрти бизнес-инкубатор строительствипе çыхăннă ĕçсене пурнăçланă май подрядчик муниципалитет контрактĕнче пăхнинчен йÿнĕрех, техника характеристикипе килĕшсе тăман резерв электростанцийĕ кÿнине, район администрацийĕ ăна йышăннине тупса палăртнă. Ĕçсене йышăннин актне саккасçăпа подрядчикăн должноçри çыннисем алă пуснă, Патăрьел райадминистрацийĕ муниципалитет контрактĕнче пăхнă оборудование йышăнса уншăн тÿленĕ. Çапла вара район бюджетне 283,6 пине яхăн тенкĕлĕх сăлтавсăр тăкак кÿнĕ.

Прокурор панă тĕрĕслев материалĕсем тăрăх Следстви комитечĕн Патăрьелĕнчи пайĕ ултав тĕслĕхĕпе Уголовлă кодексăн 159 статйин 3-мĕш пайĕпе уголовлă ĕç пуçарнă. Тĕпчев пырать.

■ **К.ЯКОВЛЕВ**

• ➡ 12 стр.

КРИМ

Ултав




# Хура куçсен тыткăнĕнче

***Ăна Шупашкарти Трактор тăвакансен проспектĕнчи çурт патĕнче чикан хĕрарăмĕ чарнă, унăн сăмахĕсем сехрене хăпартнă: «Сире пăснă…»***

Хайĕн пулăшăвне сĕннĕ. «Пăснăскер» хваттерĕнчен 20 пин тенкĕ илсе тухнă та хайхи чикана панă. Лешĕ купюрăсене чĕркенĕ, хайĕн «асамлă ĕçне» тунă та хуçине каялла тавăрса панă. «Сиплевçĕ» кайнă хыççăн хĕрарăм тӳрех килне кĕнĕ, чĕркеме уçнă – унта вара укça çук иккен!

Çийĕнчех полицирен пулăшу ыйтнă май пакунлисем çак ултавçă кам пулма пултарнине палăртнă – Чĕмпĕр хĕрарăмĕ. Ăна шыраççĕ. Çак ултав унăн пĕртен-пĕр преступленийĕ мартăр тесе иккĕленме те сăлтав пур. Йĕркелĕх хуралçисем асăрхаттараççĕ: пĕлмен-туман çынсем сире ахалех пулăшасса шанмин вырăнсăр, вĕсен тĕллевĕ пĕрре – ют укçана хăйсен кĕсйине чикесси.

# Фольга та пулăшман

***Кăнтăрла çитеспе Шупашкарти Иван Яковлев проспектĕнчи пысăк суту-илӳ комплексĕнче вăрăсенчен сыхланса лартнă «хапха» датчикĕсем сигнал панă.***

«Капкăна» Канашра пурăнакан икĕ çамрăк çакланнă. Вĕсем суту-илӳ залĕнчен 13 пине яхăн тенкĕлĕх тавар вăрттăн илсе тухма тăнă. Преступлени тума тĕплĕ хатĕрленнĕ. Çак тĕллевпе хăйсен рюкзакĕсене фольгапа чĕркенĕ картун курупкасем чикнĕ. Çав курупкасенче – вăрланă япаласем. Фольга ăшĕнчине датчиксем курмĕç тенĕ пуль те – çакă тӳрре тухман. Çамрăксене тытса чарнă.

Çав кунах Президент бульварĕнчи лавккан спорт тумтирĕ сутакан пайĕнче те пăтăрмах пулнă. 16 сехет тĕлнелле унти хуралçă сотрудникĕсем пĕр йĕкĕте тытса чарнă – вăл та лавккаран джемпер вăрлама тăнă. Суту-илӳ залĕнче вырнаçтарнă видеосăнав камери лайăх ӳкерсе илнĕ: каччă тумтире тăхăнса пăхмалли пӳлĕме хайхи джемперпа кĕрет, тухасса вара пушă алăпа тухать. Джемпера хăйĕн тумтирĕ айĕнчен тăхăннă иккен. Сутуçăсем асăрхамĕç тенĕ ĕнтĕ.

Асăрхаççĕ çав: чăвашсем «уй куçлă, вăрман хăлхаллă» теççĕ, хаяль вара лавккасем те куçлăхăлхаллă. Хурал çамрăк çынна полици сотрудникĕсен аллине панă. Ун тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă ĕнтĕ.

■ Дмитрий НИКОЛАЕВ

# "Ирĕкри тĕрме"

***«Унашкалли те пулать-и?»– тейĕ хăшĕ-пĕри. Пулать! «ТНВ» – «тюрьма на воле» – çапла ят панă аякран ĕçлеме пыракансем Воронеж облаçĕнчи Усмань районĕнчи уйрăм çынсен аллинчи «Красинский» улмаçырла хуçалăхне. Эпĕ, кăçалхипе унта тăваттăмĕш хут ĕçлеме каймашкăн хатĕрленекенскер, ку ята пачах хирĕçлеместĕп.***

Лаптăкăн-лаптăкăн куç виçейми çимĕçĕсене аран йăтса ларакан улмуççи сачĕсене нимĕнле йĕплĕ пралукпа та картламан. Кантуртисемпе ĕçлеме пынисем кирпĕч хӳмеллĕ территорие уçă хапха витĕрех кĕрсе-тухса çӳреççĕ. Чăн та, Орлово поселокĕнчи çыхăну уйрăмне е лавккана общежити комендантĕнчен ирĕк ыйтса килмелле. Эрехсăра ĕçсе шăв-шав çĕкленĕшĕн, пуççăрланнăшăн, кирек ăçти пекех, кунта та пуçран ачашламаççĕ, чикĕрен ытлашшипех тухсан алăк çине те кăтартма пултараççĕ.

Сăлтавне вара çапла ăнлантараççĕ: «Эсир ĕçме мар, ĕçлеме килнĕ». Кунашкал йĕрке пирки Шупашкарти ĕçпе тивĕçтерекен центр специалисчĕ В.Васильев малтанах «сăмса çине картса хума» сĕнет. Ăнсăртран мар. Ара, Владимир Ильич пӳлĕмне хăшĕ-пĕри инçе çула тухиччен эрех-сăра шăрши кăларса, аллирине чĕтрентерсе пырса кĕрет.

Нумаях пулмасть центр пӳлĕмĕн алăкне Шăмăршă районĕнчен килнĕ Сергей К. темрен шикленнĕн хăюсăррăн шаккарĕ. Япалисене хуралса сăранланнă миххе тултарнă. Сăн-пичĕ автомашина кустăрми айне пулса лӳчĕркеннĕ пек, хырман пичĕ чĕрĕпе аса илтерет. Çи-пуçĕ пирки те мухтанмаллиех çук.

– Воронеж облаçне кайма сĕнетĕп, – калаçу пуçарчĕ В.Васильев.

– Çу-ук, персе пăрахсан та! Унта «ирĕкри тĕрме» теççĕ…

– Йăнăшатăр эсир, ырă çыннăм. Эпĕ, акă, вăл енне тăваттăмĕш хут каяс тетĕп. Унта пĕтĕмпех хăвăнтан килет, – ăнлантаратăп çакскере çине тăрсах.

– Çук, çук, Мускав облаçнех каятăп, унти «ходы-выходне» питĕ лайăх пĕлетĕп. Пĕрремĕш хут мар, – сăмахларĕ вăл лутăрканнă, хуралса тĕссĕрленнĕ паспортне кăларса хурса.

– Нумай вырăнта ĕçленĕ те – рекордсен Гиннесс кĕнекине кĕртме сĕнмелле мар-ши сире? – йĕплесе илчĕ центр пӳлĕмĕн хуçи. Ирĕксĕрех «Красинский» хуçалăха Чăваш Республикинчен пынă çамрăк хĕр арăм тӳлевсĕр камит кăтартни куç умне тухрĕ. «Ирĕкри тĕрмене» çитнĕ-çитменех «киккирикне хĕртнĕ» вăл. «Эй, мужиксем – арçынсем, мухмăр касать, пыра чӳхемелли пур-и?» – йĕлпĕрчĕ çакскер. «Хĕр арăм пуçупах…» тесе намăслантарсан тин алăка леш енчен шалтаттарса хупрĕ «чăваш пики». Кайран та «хурт кĕнĕ кутне хĕстерсе» ларман çакскер – комендант куçĕ тĕлне лекнĕ. Лешĕ управляющие евитленĕ. Çийĕнчех вырăнти наркологи пунктне ăсатаççĕ. Мĕн тетĕр? Çине тăрсах сиплеççĕ. Уншăн кайран ĕçлесе илнĕ шалуран тытса юлчĕç.

Шăмăршă тăрăхĕнчен килнĕ леш арçын та çавăнпах, тен, «ирĕкри тĕрмене» кайма килĕшмерĕ?

■ Александр МОКИН

# "Гастролерсем" инçе каяйман

***Йĕпреç поселокĕнчи компьютер лавккин сутуçине улталаса хăварнă çынсем республика чиккинчен тухса ĕлкĕреймен, вĕсен машинине тепĕр кунне Патăрьел полицейскийĕсем тытса чарнă.***

Улталаннăскер каланă тăрăх – кăнтăрла хыççăн лавккана пĕр хĕрарăм кĕнĕ, компьютер валли «шăши» туянасшăн – пулăшма ыйтнă. Темиçе тĕслĕхе пăхнă хыççăн 410 тенкĕ тăраканнине килĕштернĕ, кассира 5 пин тенкĕлĕх купюра кăтартнă. Кассăра вакки çитеймĕкскерине кура сутуçă хĕрарăмран хайĕнчен 10 тенкĕлĕх вак укçа ыйтнă. Хăй самантлăха кăна урăх ĕçе пула тимлĕхне çухатнă, çак самантра хĕрарăм 5 пин тенкĕлĕх банкнотне хайĕн енчĕкне чиксе хунă, кассира 10 тенкĕ кăларса панă. Çапла вара сутуçă таварсăр пуçне ăна 4590 тенкĕ тыттарса янă. Çамрăк çын каланă тăрăх – хăйĕнне çакă мĕнле майпа пулса иртме пултарнине ниепле те ăнланаймасть, ăна куç пăвнă тейĕн.

«Тăна кĕрсен» вăл тӳрех урама чупса тухнă, анчах хĕрарăм çухалма ĕлкĕрнĕ. «Телее, лавкка патĕнчи территорие «Хăрушлăхсăр хула» программăпа килĕшӳллĕн вырнаçтарнă видеокамерăсем лайăх сăнаççĕ, – терĕç Йĕпреç районĕн полицийĕнче, – видеопленка çинче уçăмлă курăнать: хĕрарăм малтан лавккана кĕрет, унтан тухать те Тамбов номерлĕлĕ «Фольксваген» машинăна ларса каять». Лавккара та видеокамера пулнă – ултава вăл та ӳкерсе юлнă.

Преступлени пирки республикăри мĕн пур район полицине пĕлтернĕ май тепĕр кунне Патăрьел ялĕнче ДПС сотрудникĕсем шыраври иномаркăна асăрханă. Салонра – водитель, хĕрарăм тата 10 çулти ача. Вĕсене документсене тĕрĕслеме шалти ĕçсен пайне илсе кайнă. Пассажирĕ – Тамбов облаçĕн 45 çулти хĕрарăмĕ иккен. Йĕпреç лавккинче шăпах вăл пулнă. Сутуçă ăна палласа илнĕ.

Çак тĕслĕхпе ултавшăн уголовлă ĕç пуçарнă.

# Пенсире пулсан та – çав шухăш…

***Çĕнĕ Шупашкар сучĕ лавккара тавар туянаканăн сумкине вăрланă тĕслĕхпе приговор палăртнă. Тĕлĕнетĕр те пуль, анчах айăпланаканни – пенсири хĕрарăм.***

Хуçи хăйĕн сумкине сентре çинче хăварнă. Самантлăха кăна, анчах 55 çулти хĕрарăм çакăнпа усă курса ĕлкĕрнĕ. «Тепĕр кунне пенсионерка çухату тӳснĕскер патне телефонпа шăнкăравланă, укçа тӳлесен документсене тавăрса пама шантарнă, – каласа парать химиксен хулин полицийĕн следстви пайĕн пуçлăхĕн çумĕ Дмитрий Шмаков. – Укçине алăран тыттармалла мар, хăйĕн банк карточки çине куçармалла – 5 пин тенкĕ. Унсăрăн хаклă документсене кăларса пăрахассипе хăратнă».

Сумкăсăр юлнăскер тĕрĕс тунă: укçа куçарман, çакăн çинчен полицие евитленĕ. Оперативлă шырав мероприятийĕсем йĕркелесе пакунлисем вăрра тупса палăртнă.

– Малтанах вăл хăйĕн хăтланăвне тӳрре кăларма тăчĕ-ха, – теççĕ полицире, – сумкăна, енчĕке вăрламан, документсене урамра тупнă имĕш. Каярахпа вара, лавккари видеосăнав камери çырса юлнине кăтартсан, урăхларах çаптарма тытăнчĕ: сумкăри укçана тытман, сумкăна тата унти япаласене, çав шутра укçа енчĕкне кăларса пăрахнă-мĕн, документсене вара вĕсемшĕн укçа илес тĕллевпе упраса хăварнă.

Суд кукăр алăллă пенсионеркăна çулталăклăх тĕрĕслев вăхăчĕ палăртса 1 çул та 1 уйăхлăха условнăй майпа ирĕклĕхсĕр хăварма йышăннă.

■ Инна СУРКОВА

# Ха-ха-ха! Ахăлтатса кулар-ха!

**Суд пырать.**

**– Эсир мĕншĕн çак çынна тĕллесе пенĕ?**

**– Эпĕ унта, тĕмсен хыçĕнче, пăши пуль терĕм.**

**– Пăши мар, çын пулнине хăш самантра ăнланса илтĕр?**

**– Пăши хирĕç пеме пуçласан…**

* * *

**Вăрă ывăлне хĕнесе ăс парать:**

**– Сана савăтри пĕтĕм варение ыйтмасăрах çисе янăшăн мар, çав савăт çинче пӳрне йĕрĕсене хăварнăшăн хĕнетĕп!**

* * *

**– Усăр, полици!**

**– Эсир унта мĕншĕн хупăнса ларнă вара?**

* * *

**Суйлав комиссийĕнче кĕпĕрнаттăра суйланма хатĕрленекен кандидатсенчен документсем йышăнаççĕ.**

**– Юлашки ĕç вырăнĕнче эсир мĕн вăхăт ĕçленĕ?**

**– 9 çул…**

**– Чылай. Унтан мĕншĕн пăрахса кайрăр?**

**– Приговор вăхăчĕ вĕçленчĕ.**

* * *

**– Судпа айăпланнă Петров! Мĕншĕн сирĕн пата тăванăрсем килсе çӳремеççĕ? Мĕн, никам та çук-им?**

**– Пур-çке – питĕ нумай! Анчах вĕсем пурте кунта.**

* * *

**ПАИ инспекторĕ юранинчен пысăкрах хăвăртлăхпа килекен автомобилне чарать.**

**– Эсир «40» палла куртăр-и?**

**– Куртăм.**

**– Апла тăк мĕншĕн 500 тенкĕлĕх хăвăртрах çӳретĕр?**

* * *

**– Арăму сана урăххипе улталанни пирки иккĕленместĕн-и? – ыйтать камерăри ристанран юлташĕ.**

**– Иккĕленместĕп.**

**– Мĕншĕн?**

**– Пĕрремĕшĕнчен, вăл мана юратать. Иккĕмĕшĕнчен, вăл йĕркеллĕ хĕрарăм. Виççĕмĕшĕнчен, вăл та тĕрмере ларать.**

* * *

**– Медицина энциклопедине вулатăп та – манăн темле чир те пур пек.**

**– Манăн та çаплах: Уголовлă кодекса вулатăп та – хама тĕрмери пекех туйса илетĕп.**

Кăларăма Николай КОНОВАЛОВ хатĕрленĕ. • Çырăр: Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13, «Хыпар» – КРИМ • Шăнкăравлăр: Тел. /8352/ 56-05-21.

# ЫЙТУ ХУРАВ

## Шафран

**Апата техĕм кĕртекен шафрана хăш ҫĕршывра ӳстереҫҫĕ, ăна мĕнле хатĕрлеҫҫĕ?**
**В.ЕМЕЛЬЯНОВА.**
Вăрмар поселокĕ.

Апат-ҫимĕҫе /тĕслĕхрен, испансен паэлья блюдине/ тĕс тата техĕмлĕ шăршă кĕртекен шафрана крокус чечекĕнчен хатĕрлеҫҫĕ. Тĕрĕсрех, ӳсентăранăн шăрка тунинчен. Хĕрарăмсем чечеке алăпа пухаҫҫĕ, ҫимĕҫ тунинчен шăрка тунине уйăрса илеҫҫĕ.

Месопотамире шафранпа пирĕн эрăччен 3000 ҫул каяллах усă курнă. Авалхи Грецире вăл хăватлă афродизиак пулнине пĕлсе чечеке ҫывăрмалли пӳлĕме сарса хунă. Клеопатра савнийĕсемпе тĕл пуличчен шафран янă шывра ачашланса выртма юратнă. Европăра тĕрлĕ курăк пухакан ăста ятне илнĕ Кульпеппер 1649 ҫултах асăрхаттарнă: шафран питĕ хытă култарать, ҫавна май ҫын вилме пултарать. Мĕншĕн тесен шафран – питĕ вăйлă антидепресант.

Шафран – апата техĕм кĕртекен питĕ хаклă



япала. Ĕлĕкрех Европа ҫĕр-шывĕсене, уйрăмах Испание, хĕрлĕ кăвак тĕслĕ крокус чечекĕ ӳсекен уйсем илем кӳнĕ. Хальхи вăхăтра, тĕпрен илсен, Иранра кăна крокус ҫитĕнтереҫҫĕ.

Пĕр килограмм шафран хатĕрлеме 170 пин чечек кирлĕ. Иранра ҫулсерен вун-вун миллиард крокус чечеке ларать. Пĕр килограмшăн АПШра 700 доллар тӳлеме хатĕр.

## Жомини баронсен йăхĕ

**Куславкка районĕнчи культура палăкĕсен шутĕнче Жомини барон ҫурчĕ те пур. Мĕнпе палăрнă ҫак йăх? Хушамачĕпе чăваш марри курăнать. Чăваш ҫĕрне мĕнле лекнĕ вĕсем?**
**О.ОСИПОВ.**
Элĕк районĕ.



Хальхи вăхăтра чул никĕс ҫинче ларакан икĕ хутлă, 15 пӳлĕмлĕ, шалтан штукатурка тунă, тимĕрпе витнĕ ҫурт хулана илем кӳрет.

Жомини баронсен йăхĕ Октябрь революцийĕ умĕн Чăваш Енри чи пуян ҫĕр хуҫисем шутланнă. Вĕсен Куславкка хули тата Куславкка пристанĕ ҫумĕнчи имений 1061 теҫеттин тата 2333 чалăш ҫĕр йышăннă. Питĕ чаплă икĕ хутлă ҫурт, парк пулнă. Баронсем Куславккари ярмăркка тата пасар валли ҫĕр тара панинчен, икĕ хупахран, ҫăкăр тата вută пристанĕнчен, тавара Атăл урлă каҫарнинчен тупăш илнĕ. Атăл пăрĕ те Жоминисен харпăрлăхĕ шутланнă. Ҫавна май ҫыран хĕрринче хуралҫă ларнă. Вăл хресченсем нӳхрепе валли тӳлевсĕр пăр илесрен сыхланă.

Жомини баронсен Раҫҫейри йăхне пуҫараканĕ Генрих Вениаминович /1779-1869, чăн ячĕ Антуан-Анри/ – историре тарăн йĕр хăварнă ҫын. Малтан Швейцари ҫарĕнче службăра тăнă, 1804 ҫултанпа – Наполеон ҫарĕн бригада генералĕ. Вăл выраҫсемпе ҫапăҫман. 1812 ҫулсенче – Вильна, унтан Смоленск кĕпĕрнаттăрĕ пулнă. Наполеонпа тусла пурăннă, Франци императорĕ ыйтнипе 1796-1800 ҫулсенчи Итали похочĕн историне ҫырнă. Дивизи генералĕн чинне паманшăн кӳренсе I Александр вырăс патши патне службăна кусна, генерал-лейтенант чинне илнĕ. Ҫак утăм А.Жомини пурнăҫне тĕпрен улăштарнă, шăпине яланлăх Раҫҫейпе ҫыхăнтарнă, унăн йăх тăсăмĕсене Куславкка ҫĕрĕпе ҫывăхлатнă. Антуан-Анри Агландо Розелло Наполеона качча илнĕ. Барон Раҫҫей ҫар теорине хатĕрлес ĕҫе пысăк тӳпе хывнă, историре тарăн йĕр хăварнă, Генштабăн академине никĕсленĕ.

Жомини баронсен Куславккари пурнăҫĕн пуҫламăшĕ Александра Николаевна /хĕр чухнехи хушамачĕ – Чемезова/ баронессăпа ҫыхăннă. Вăл Иван Дмитриевич Леонтьев улпутран Куславккара ҫĕр туяннă. Александра Николаевна Антуан-Анри баронăн кинĕ: 1836 ҫулта вăл унăн ывăлне, Карл Генриховича /1811-1869/, качча тухнă. 1891 ҫулта баронесса вилнĕ хыҫҫăн имени ывăлне Николай Карловича /1837-1902/ куҫнă. Унтан ăна Николай Николаевич /1861-1910/ барон улăштарнă. Вăл Куславкка тăрăхне питĕ юратнă, вилсен хăйне кунтах пытарма ыйтнă. 1910 ҫулхи ҫу уйăхĕн 21-мĕшĕнче Питĕре кайнă чухне чĕрине шалкăм ҫапнăран ҫул ҫинчех вилнĕ. Вунă кунтан ăна чăваш ҫĕрне илсе килсе чиркӳ масарне пытарнă.

1918 ҫулта баронсен Куславккари харпăрлăхне туртса илнĕ. Жоминисен ҫемйине революци хура-шурĕ ҫĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесне салатнă.

## Ҫĕр-шыва хăратакан чĕр чун

**Кроликсем Австралие шар кăтартаҫҫĕ имĕш. Мĕнле майпа? Унти кăткăс лару-тăру пирки каласа кăтартсамăр.**
**А.ЕФИМОВ.**
Елчĕк районĕ.

1859 ҫулта читлĕхрен тухса тарнă кроликсем паян та Австрали экологийĕшĕн пысăк хăрушлăх кăларса тăратаҫҫĕ. Хĕрĕх ҫул хушшинче ҫак чĕр чунсем, ҫут ҫанталăкра вĕсене «парăнтарма» пултаракан тăшман пулманран, чăннипех те наци инкекĕ пулса тăнă. 1900 ҫул тĕлне ҫĕр-шывра 20 миллион пуҫ шута илнĕ.

Кроликсем сурăхсемпе майракаллă шултра выльăхшăн чăн-чăн тăшман: вĕсен ҫăварне кĕрес апата пĕтереҫҫĕ. Ҫак инкек те пур: кроликсем ӳсен-тăрана тымарĕпе ҫисе яраҫҫĕ, ҫамрăк йывăҫсене кăшлаҫҫĕ. Вĕсене пула Австралире чĕр чун тата ӳсентăран тĕнчин питĕ нумай тĕсĕ тĕппипех пĕтнĕ.

Австрали халăхĕ ҫур ĕмĕр ытла кроликсемпе ҫапăҫать. Пăшалтан перет, наркăмăш парать, йăвисене сирпĕтет, анчах усси сахал. Вĕсемпе кĕрешме Европăран тискер чĕр чунсене те – тилĕ, пăсара, юс – илсе килнĕ. Кроликсене ҫĕнĕ районсене пырса кĕресрен сетка карта тытса та сыхланма тăрăшнă. Ҫапах та нимĕнле меслет те туллин пулăшайман.

XX ĕмĕр варринче бактериологи мелне шухăшласа кăларнă.



Кроликсене ятарлă вируспа чирлеттерме пуҫланă. Малтанах питĕ ăнăҫлă пек туйăннă: Австралин чылай пайĕнче кроликсен 90 ытла проценчĕ вилсе пĕтнĕ. Анчах чĕрĕ юлма мехел ҫитернĕ чĕр чунсен иммунитечĕ ҫирĕпленнĕ. Ҫавна май Австралире тата Ҫĕнĕ Зеландире кроликсем кăларса тăратакан хăрушлăх паян та пысăк.

## Ҫĕр вăрлани

**Мăн асаттесем ҫĕр пулăхлăхне ӳстерме ятарлă йăла-йĕрке туса ирттернĕ. Ҫакăн пирки тĕплĕнрех пĕлес килет.**
**И.САМОЙЛОВ.**
Чĕмпĕр облаҫĕ.

Авалхи чăвашсен ĕненĕвĕ тăрăх – ют йăх ҫĕрне вăрласа тăпра пулăхлăхне ӳстерме пулать. Ҫак тĕллевпе хăйне евĕр йăла-йĕрке – «Ҫĕр вăрлани» ирттернĕ.

Ҫак йăла туй йĕркине ҫывăх. Унта арҫынсем кăна хутшăннă. Кĕрӳ каччи пулма тăлăха суйласа илнĕ. Тĕшмĕшле халап тăрăх – вăл ватăличчен пурăнайман. Авланакан каччăна ял-йыш тумтир, ҫăкăр-тăвар, апат-ҫимĕҫ, укҫа пухса панă.

Капăр тумланнă вăй питти арҫынсем кĕрекере хăналаннă хыҫҫăн ҫĕрле туй юррисем шărантарса «хĕр» илме кайнă. Хăйсен ҫĕрĕн хĕррине ҫывхарсан шăпланнă. Малтанах палăртса хунă хир патне ҫитсе чарăнсан кĕрӳ каччине алăран тытса кӳме ҫинчен антарнă. Унпа юнашар «туй пуҫĕ» тăнă. Вăл тыр-пул уйне, пуян тупраллă хĕр вырăне хурса, качча тухма ӳкĕтленĕ. Хăйсен тăрăхĕнчи хирсенче, улăх-ҫаранта, вăрманта ӳсекен ҫимĕҫсене парне вырăнне панă.

Унтан арҫынсем урапа ҫине ҫĕр тиенĕ, мĕн пур вăя пухса ҫак вырăнтан тарнă. Хуҫасем ҫĕр вăрланине сиссен хăваласа ҫитсе тупрана туртса илме, питĕ хытă хĕнеме пултарнă.

Ҫĕр вăрлакансем хăйсен тăрăхне ҫитсен ҫĕнĕрен савăнма, юрлама-ташлама пикеннĕ. Кĕрӳ каччи кӳме ҫинчен аннă, мăшăр пулма суйланă «хĕре» ҫĕнĕ ҫĕрсемпе паллаштарнă, ĕмĕр юратса пурăнма тупа тунă, хăйне те савма – унăн ялĕ ҫывăхĕнчи ҫĕрсемпе ҫарансене ырлăх яма – ыйтнă. Кашни урапа ҫинчен пĕрер кĕреҫе ҫĕр илсе сапаланă. Юлнă тăпрана яла кайнă чухне ҫула май пăрахса пĕтернĕ. Ҫакăн хыҫҫăн тул ҫути киличченех кĕрекере савăннă.

Тăпра пулăхлăхĕ чакнине чăвашсем чылай чухне ҫĕр вăрланипе сăлтавланă.

## Чăваш Енри выҫлăх

**1921-1922 ҫулсем Чăваш Еншĕн питех те хăрушă пулнă: выҫлăх хуҫаланнă. Халăх ҫак инкеке мĕнле майпа чăтса ирттернĕ-ши?**
**С.МИХАЙЛОВ.**
Канаш хули.

Ҫав ҫулсенче выҫлăх вăтам тата анат Атăлҫире, Хура тинĕс тата Урал тăрăхĕнчи районсенче, Хĕвел анăҫ Ҫĕпĕрте хуҫаланнă. 1921 ҫулхи ҫуркуннехи тата ҫуллахи типĕ ҫанталăк выҫлăх сăлтавĕсенчен пĕри ҫеҫ. Тĕнчен пĕрремĕш тата Граждан вăрҫи ҫулĕсенче Чăваш Енри хресчен хуҫалăхĕ вăйлă хавшанă. Ҫар коммунизмĕ тапхăрĕнчи продразверстка та витĕм кӳнĕ.

Икĕ ҫулта Чăваш Енре выҫса тата чирлесе 13238 ҫын вилнĕ. Облаҫ хăй тĕллĕн ку инкеке парăнтарма пултарайман. Правительство продразверстка вăхăтĕнче пухса хатĕрленĕ саппассемпе усă курма ирĕк паман. 1921 ҫулхи ҫулла тин Мускавра выҫăпа аптăракан Чăваш автономи облаҫне пулăшма йышăннă. Пулăшăва патшалăхăн анлă кампанийĕ пек йĕркеленĕ. Ҫак тапхăрта хресченсенчен налук пухассине пăрахăҫланă, вăрлăхпа, апат-ҫимĕҫпе, укҫапа т.ыт.те тивĕҫтерме йышăннă.

Уйрăмах ачасемшĕн тăрăшнă. Чылай ялта пĕчĕккисем валли столовăйсем уҫнă. 1921 ҫулхи чӳк уйăхĕнче вĕсен шучĕ 197 пулнă. 1922 ҫулхи утă уйăхĕ тĕлне 1549-а ҫитнĕ. Ҫавăн пекех аслисене те общество апатланăвĕпе тивĕҫтерме тăрăшнă. Выҫлăхпа кĕрешмелли тĕп меслетсенчен пĕри – ҫынсене ҫĕршывăн ăнăҫлă районĕсене тата яланлăх пурăнма Ҫĕпĕре ăсатни. Мускава, тĕп тата хĕвел анăҫ кĕпĕрнесене 5744 ачана эвакуациленĕ. 29000 ҫын Ҫĕпĕре тата ытти района тухса кайнă.

Ют ҫĕр-шывсем те выҫлăхпа кĕрешме нумай пулăшнă. Пĕтĕм тĕнчери ĕҫ халăх пулăшăвĕн комитечĕ, Америкăн пулăшу администрацийĕ, Хĕрлĕ Хĕрес организацийĕсен урлă 400 пин ытла пăт апат-ҫимĕҫ килнĕ. Пĕтĕм тĕнчери тред-юнионсен федерацийĕ выҫă ачасем валли 40 пин паек уйăрнă. Патшалăх тата мĕн пур халăх пулăшăвĕ Чăваш автономийĕнчи вун-вун пин ҫын пурнăҫне, ял хуҫалăх производствин хăвачĕ чакасран сыхласа хăварнă.

Выҫлăх хыҫҫăнхи синкере сирме патшалăх, облаҫ, уес шайĕнче ятарлă комиссисем йĕркеленĕ. Вĕсем 1923 ҫулхи раштав уйăхĕн 1-мĕшĕнчен экономикăна йĕркене кĕртес, общество апатланăвне йĕркелес, эвакуаципе кайнă халăха каялла тавăрма пулăшас тĕллевпе ĕҫленĕ. Пĕтĕмпе фонда 353467 пăт тырă, 79952 пăт апат-ҫимĕҫ, 4916432 тенкĕ укҫа, 241 пăт эмел т.ыт.те пухăннă.

Чăваш Ен 1921-1922 ҫулсенчи выҫлăхра ҫĕр-шывăн ытти районĕнчен вăйлăрах шар курни пĕрремĕш пилĕк ҫуллăх пуҫланиччченех сисĕнсе тăнă. Ҫав тапхăрта арканнă халăх хуҫалăхĕ унăн экономикине вăй илме чылай хушă чăрмантарнă.

Кăларăма Валентина БАГАДЕРОВА хатĕрленĕ.

Ӑсталӑх лаҫҫи

# Паянхи шкул вулавӑшран пуҫланать-и?

***Ҫамрӑк ӑрӑва кӗнекене юратма вӗрентес тесен мӗн тумалла? Паян, ачасем хӑйсене кирлӗ произведенисене планшетпа вуланӑ чухне, шкул библиотекисем кирлӗ-и? Шӑпӑрлансен ӑс-хакӑлне аталантарма мӗнле ҫул-йӗр пур-ши? Пӗлӳ ҫурчӗн вулавӑшӗнче ӗҫлекенсем иртнӗ ӗмӗрӗн 70-80-мӗш ҫулӗсенче мӗнле мероприятисем ирттернӗ-ши? Ҫак тата ытти ыйтӑвӑн хуравне тупас тӗллевпе Улатӑр районӗнчи Кивӗ Эйпеҫре пурӑнакан Юлия Андреевӑпа тӗл пултӑм. Юлия Витальевна 38 ҫул шкул библиотекинче вӑй хунӑ.***

«Юпа уйӑхӗн вӗҫӗнче эпир вулавӑшра Пӗтӗм тӗнчери шкул библиотекисен кунне паллӑ турӑмӑр. Кунта пурте савакан Юлия Витальевна ӗҫлет. Вӑл сӗре кӑмӑллӑ ҫын. Ӑна ачасем хӑйсемпе калаҫма, пӗр чӗлхе тупма пӗлнӗшӗн хисеплеҫҫӗ. Пире вӑл яланах ӑш пиллӗн, йӑл кулӑпа кӗтсе илет. Пурте килӗштереҫҫӗ ӑна, уҫӑ кӑмӑллӑскере. Тӗрӗссипе, ун пек ҫынна юратмасӑр май та ҫук», – ҫырнӑ хӑй вӑхӑтӗнче 8-мӗш класра вӗренекен Светлана Тукмакова Улатӑр район хаҫатӗнче. «Шкул библиотекӑран пуҫланать» заметка «Здесь наши корни» кӗнекере те вырӑн тупнӑ. Унпа эпӗ вулакана ахальтен паллаштармарӑм. Юлия Витальевна тӗлӗнмелле пуян чун-чӗреллӗ ҫын. Хӗвел пек ӑшӑ та ырӑ кӑмӑлӗпе, тараватлӑхӗпе, йывӑҫ тымарӗ пек тарӑн ӑс-тӑнӗпе нумай ҫынна хӑйӗн патнелле туртать вӑл. Ҫавӑнпах ялта ят-хисепӗ те пысӑк. Кивӗ Эйпеҫсем ялта клуб ҫук пулин те питӗ чӗрӗ халӑх. Вера Разбойкина тата ытти культура ӗҫченӗ йӗркелесе пынипе кунта куллен интереслӗ мероприяти иртет. Хӑйне евӗрлӗхӗпе паларӑҫҫӗ вӗсем. Сӑмахран: Мӑнкунра ратнесен уявне паллӑ тунӑ. Юлия Андреева вӗсене ялан хастар хутшӑнать. Чӑваш халӑх йӑли-йӗрки, культури ан манӑҫтӑр тесе тӑрӑшать. Хӑй тахҫанах тивӗҫлӗ канӑва тухнӑ пулин те ҫак ыйтусем ӑна питӗ канӑҫсӑрлантараҫҫӗ.

«Ача чухне эпӗ вӗрентекен пулма ӗмӗтленеттӗм. Ялти шкулта 8 класс пӗтернӗ хыҫҫӑн Канашри педучилищӗне кайса пӑхрӑм – телей пулмарӗ. Каярах И.Я.Яковлев ячӗллӗ чӑваш патшалӑх педуниверситетне вырӑс-чӑваш уйрӑмне кӗрес терӗм те – вӗсене пайларӗҫ. Вара документсене илтӗмӗр те хӗр тусӑмпа Казахстана туха кайрӑмӑр. Оседлое шкулне ӗҫе пионер вожатӑя вырнаҫрӑм. Хама аванах кӑтартрӑм-ши – обласри хаҫатран та килсе ӳкерсе кайрӗҫ. Ҫулла тӑван яла отпуска килсен шкул директорӗ калаҫтарма пуҫларӗ. «Вожатӑйра ӗҫлессишӗн мӗншӗн унта ҫитиех каймалла, кунта та хӑвӑн вырӑнна тупма пултаратӑн»,– терӗ хайхи. Ҫапла вара Кивӗ Эйпеҫ пӗлӳ ҫуртӗнче библиотекӑра вӑй хума тытӑнтӑм. Лере директор ман вырӑна чылайччен тытса тӑнӑ. Ҫыру хыҫҫӑн ҫыру яратчӗ. Ӗҫ кӗнекине те час ярса памарӗ», – аса илет пурнӑҫ ҫулне Юлия Витальевна.

Вулавӑшра та вожатӑй пекех класс тулашӗнчи ӗҫсене йӗркелемелле. Хӑнӑхнӑ темелле. Ак хайхи библиотекарь ӗҫӗ те кӑмӑла килет Юлия Андреевӑна. Пӗлӳшӗн ӑнтӑлаканскер Ҫӗрпӳри культурӑпа ҫут ӗҫ училищинчен вӗренсе тухать. 1971 ҫултан пуҫласа 2006 ҫулччен вулавӑш хуҫинче тӑрӑшать. Ҫак тапӑхӑрта миҫе ачана кӗнекен илӗртӳллӗ тӗнчине илсе кӗмен-ши вӑл? Хистесе, «шаккаса» мар, вӑйӑ-конкурспа, спектакль сыпӑкӗсемпе, ваттисен сӑмахӗсемпе, каларӑшсемпе, викторинӑсемпе, кӑсӑклӑ тӗл пулусемпе… «Ӗҫӗ, чӑнах та, килӗшетчӗ. Вӗренекенсем ман паталла туртӑнатчӗҫ. Яланах кӗнекепе ҫыхӑннӑ мероприяти йӗркелеттӗмӗр. Кӗнеке илме килсен хӑйсем те тӗрлӗ сӗнӳ паратчӗҫ. «Чун ҫимӗҫӗсӗр» тӑман ун чухне ҫамрӑксен. Ҫав ҫулсенче вулавӑш фондӗнче 20000 ытла кӗнекеччӗ. Чӑвашли те самаййӗ: 15 000 яхӑн. Илемлӗ литература та пулнӑ. Пире тата Шупашкартан Степан Лашман писатель кӗнекесем ярса паратчӗ. Алӑ пуссах парнелетчӗ. Библиотекӑра унӑн ӗҫӗсене халалласа курав та йӗркеленӗччӗ. 1927-1930 ҫулсенче вӑл пирӗн шкулта директорта ӗҫленӗ. Кунта вӑл радиокружок йӗркеленӗ, ачасемпе ҫамрӑксене хӑй ҫырнӑ пьесӑсемпе спектакльсем лартнарнӑ. Библиотекарьте ӗҫленӗ тапхӑрта эпӗ ун патне Шупашкара икӗ хутчен те кайнӑччӗ. Вӗсем мӑшӑрӗпе Ашмарин урамӗнче пурӑнатчӗҫ. Вашават кӗтсе илетчӗҫ. Ҫыравҫӑ Кивӗ Эйпеҫре ӗҫленӗ ҫулсене ырӑпа аса илетчӗ, пирӗн яла шутсӑр юрататчӗ. «Килсе куратӑпах эпӗ сирӗн пата»,– тетчӗ. Анчах килесси пулмарӗ, вӑл вӑхӑтра пирӗн патӑмӑра Шупашкартан самолет вӗҫетчӗ. Писатель «тимӗр кайӑкпа» вӗҫме сывлӑх хавшакрах тетчӗ. Тӗрмере айӑпсӑр ларни пирки тӑтӑшах сӑмах пуҫаратчӗ, ал ҫыру нумай ҫухални пирки хурланатчӗ. Каярах вӑл пирӗн патӑмӑра – библиотека тусӗсен ячӗпе ҫырусем ҫыратчӗ. Ашмаринӑн 17 томлӑ словарьне парнелеме шантаратчӗ. Хӑй ҫырнӑ пьесисене ярса паратчӗ. Вьетнам ачисем ҫинчен хайланине эпир ачасемпе ял-ял тӑрӑх лартса ҫӳреттӗмӗрччӗ. Спектакль умӗн пухӑннисене яланах Степан Лашман пултарулӑхӗпе паллаштараттӑмччӗ. Пире Чапаевка поселокӗнче те, Паснапуҫ ялӗнче те хаваспах йышӑнатчӗҫ. Ҫыравӗсенче ҫыравҫӑ ҫамрӑк ӑрӑва яланах ырӑ сӗнӳсем паратчӗ»,– каласа парать Юлия Витальевна.



● Юлия Андреева.

Нумай шкулта паян вулавӑш ҫукки хытах пӑшӑрхантарать ӑна. «Капла ачасем чӑвашла вулама та манаҫҫӗ пуль», – салхуланать вӑл. Юлия Андреева пӗлтернӗ тӑрӑх – вӗсем кашни уяв тӗлне мероприяти ирттернӗ. Вӗсене шкулти вожатӑйпа, ялти вулавӑш «хуҫипе» пӗрле те йӗркеленӗ. Кашни уяврах кӗнекене пропагандӑланӑ. Кашни мероприятиех «чун ҫимӗҫӗпе» ҫыхӑнтарнӑ. Вӗсем хыҫҫӑн ачасем тепӗр куннех вулавӑша кӗпӗрленсе килетчӗҫ. Чун хӗпӗртетчӗ. 15-20 тӗрлӗ хаҫат-журнал ҫырӑнса илеттӗмӗр. Район центрне кайнӑ чухне мероприятисене вырӑсла ирттерме тиветчӗ. Эпир ялта кӑна чӑвашчӗ, Улатӑра тухсан – вырӑсчӗ. Пӗрре, спектакль сыпӑкне чӑвашла кӑтартнӑччӗ те – эх кулчӗҫ ҫав пирӗнтен. Ун чухне район администрацийӗнче чӑвашла пӗлекен хӗрарӑм пурччӗ те пире ҫӑмӑлрахчӗ, хӳтӗлетчӗ. Халӗ унта ирҫесемпе вырӑссем кӑна юлнӑ. «Чӑваш радионе ярсан та манран кулаҫҫӗ»,– пытармастчӗ ҫав хӗрарӑм. Ас тӑватӑп-ха: «Атте, анне тата эпӗ – вулакан ҫемье» мероприяти питӗ лайӑх иртнӗччӗ. Конкурсӗсене кӑсӑклантармалла йӗркеленӗччӗ. Тӗпренчӗкӗсем пӗлменнине ашшӗ-амӑшӗ хуравлатчӗ. Ун хыҫҫӑн ачасем пӗр уйӑх кӗнеке илме чупрӗҫ. Тӗрӗссипе, вӗсем кашни уяв каҫӗ ыйтсӑнах «чун ҫимӗҫӗ» патне пыратчӗҫ. Чылай чухне ачасен тавра курӑмне аталантарас, ас тӑвӑмне ӳстерес тӗллевпе конкурс-викторина ирттереттӗм. Шӑпӑрлансем сӑвӑ пӑхмасӑр калакансен конкурсне юрататчӗҫ. Чи маттуррисене, кӗнеке нумай вулакансене тӑтӑшах хавхалантараттӑмӑр. Хальхи ачасем сӑвва та час ас туса юлаймаҫҫӗ. Библиотекарьсене мероприятисем ирттерме ҫӑмӑл мар. Ҫамрӑк ӑру хутшӑнасшӑнах мар-мӗн вӗсене. Ачапчана паян компьютер кӑна илӗртет. «Шкул библиотеки усмасть те»,– теҫҫӗ. Мӗншӗн тесен уйрӑм библиотекарь ставкине пӗтерчӗҫ. Вулавӑша учительсене шанса параҫҫӗ. Вӗсен вулавӑшпа аппаланма вӑхӑт та ҫук. Вӗрентекенсем вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнӑ чухне ачасене учебниксем валеҫсе параҫҫӗ те ҫу уйӑхӗн вӗҫӗнче пухса илеҫҫӗ. Ачасем кӗнеке ан вулаччӑр тесе ҫапла турӗҫ-ши? Пӗлӳ ҫуртӗнче библиотека та ӗҫлемест тӗк, вожатӑй та ҫук тӑк – ҫамрӑксем кӗнеке патне туртӑнччӑр, тавра курӑм аталантӑр тесе мӗн тӑватпӑр-ши?

Манӑн шухӑшпа, шӑпӑрлансене кӗнеке вулама юратттарасчӗ тесе хаҫатсем тӑрӑшма пуҫларӗ. «Ҫамрӑксен хаҫатӗнче» «Ачапча» кӑларӑм пур, «Тетте» журнал та тухать. Манӑн тӑваттӑри мӑнук та: «Асанне, «Тетте» килнӗ», – тесе епле савӑнать»,– чунне уҫать Юлия Витальевна. Юлия Андреева шухӑшӗпе Интернетран хыпар-хӑнар кӑларса илнипех ачапчан тавра курӑмӗ аталанаймасть, ас туса юласлӑхӗ ӳсмест. Аслӑ библиотекарь калани тӑрӑх – мероприятисене писательсене те чӗнмелле, вӗсемпе ҫыхӑну тытмалла. Кӗнеке хӑтлавне ытларах йӗркелемелле. Юлия Витальевна паян та «чун ҫимӗҫӗсӗр» пурӑнаймасть. Ялти вулавӑша куллен ҫӳрет. Денис Гордеевӑн хайлавӗсене, Порфирий Афанасьевӑн сӑввисене сӗре кӑмӑллать. Пушӑ вӑхӑтра вӑрмана ҫӳрет.

■ **Роза ВЛАСОВА.**

Автор сӑн ӳкерчӗкӗ

## Николай Васильевич КАРГИН

**83 ҫула кайса 2014 ҫулхи утӑ уйӑхӗн 23-мӗшӗнче Социализм Ӗҫӗн Геройӗ Николай Васильевич Каргин вилнӗ.**



Н.В.Каргин 1932 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 13-мӗшӗнче Чӑваш АССРӗнчи Патӑрьел районӗнчи Кивӗ Ахпӳрт ялӗнче хресчен ҫемйинче ҫуралнӑ.

1952 ҫулта «Гвардеец» колхозра вылӑх-чӗрлӗх ӗрчетекенре ӗҫлеме пуҫланӑ, унтан ҫак хуҫалӑхӑн сысна пӑхакан механизаторӗ пулнӑ. 1979 ҫултан тытӑнса «Южное» МХПра вылӑх самӑртакан цех операторӗнче тӑрӑшнӑ. 1982 ҫултан тытӑнса тивӗҫлӗ канӑва кайиччenex Николай Васильевич «Гвардеец» колхозра ӗҫленӗ.

Вылӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫри ҫитӗнӗвӗсемпе Н.В.Каргин пӗтӗм республика чапне ҫӗкленӗ. Ун чухне нумай хуҫалӑхра сыснасене пысӑк ушкӑнсемпе самӑртмалли технологисемпе усӑ курнӑ май вӑл 500 пуҫран тӑракан ушкӑна пӑхнӑ, кайран вӗсен шутне 600 таран ӳстернӗ. Ҫапла вара Николай Васильевич республикӑра пӗччен вылӑхӑн ҫавӑн пек пысӑк ушкӑнне самӑртас енӗпе чи малтан ӗҫлеме тытӑннӑ, сыснасем талӑкра ӳт хушассине 500-600 грама ҫитернӗ.

Унӑн тухӑҫлӑ ӗҫне патшалӑх наградисемпе палӑртнӑ. Вылӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫри ҫитӗнӳсемшӗн, сӗтелле ӗҫленӗшӗн тата сысна ашӗ туса илессипе ҫыхӑннӑ пысӑк кӑтартусемшӗн СССР Аслӑ Канашӗн Президиумӗн 1966 ҫулхи пуш уйӑхӗн 22-мӗшӗнче кӑларнӑ указӗпе Николай Васильевич Каргина Социализм Ӗҫӗн Геройӗн ятне панӑ, Ленин орденӗпе тата «Ҫурлапа Мӑлатук» ылтӑн медальпе чысланӑ.

Н.В.Каргинӑн нумай ҫула тӑсӑлнӑ ырми-канми ӗҫӗ – Тӑван ҫӗршыва парӑннин ҫутӑ тӗслӗхӗ.

Унӑн тӑванӗсемпе тата ҫывӑх ҫыннисемпе пӗрле чун-чӗререн хурланатпӑр.

**М.В.Игнатьев, Ю.А.Попов, И.Б.Моторин, А.С.Иванов, А.В.Самойлова, С.В.Павлов, М.В.Петров, Н.И.Глухов.**

Ҫул-йӗр

# Чул сапалаҫҫӗ, асфальт сараҫҫӗ

***Утӑ уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче «Чӑвашавтодор» обществӑн Ҫӗмӗрлери территори производство управленийӗ Сӑр юппи – Улатӑр юхан шывӗ – урлӑ иртекен сыпӑкне юсаса пӗтерчӗ.***



Вӑл кӗпертен пуҫласа Чӗмпӗр облаҫӗ еннелле 3 ҫухрӑма тӑсӑлать. Ӗҫе пурнӑҫлама ЧР хысниинчен 21 млн тенкӗ уйӑрнӑ. Муркаш районӗнчи Москакасси ялӗнчи Кӳлӗ урамӗнчи ҫула /338 м/ хытарма бюджетран 1188 пин тенкӗ куҫарчӗҫ. Оринин ял тӑрӑхӗнчи Чамӑш ялӗнчи Иккӗмӗш урама /260 м/, Вӑрманкасси ялӗнчи Ҫурҫӗр урамне хӑйӑр, вӗт чул сарса такӑрлатрӗҫ. Ӗҫ пахалӑхне ЧР транспорт тата ҫул-йӗр хуҫалӑхӗн министрӗ Владимир Филиппов тӗрӗслерӗ, строительсем хӑйсен тивӗҫне тӳрӗ кӑмӑлпа пурнӑҫланине палӑртрӗ. Чамӑшсем нимелле тӑрӑшса укӑлча хапхине вырӑнне лартнӑ ӗнтӗ. Ку ҫулсене тума 1278 пин тенкӗ тӑкакларӗҫ.

Муркаш енри пурӑнмалли ҫуртӑн 7 картишне асфальт сарса тикӗсленӗ. Ҫурлатӑрри ялӗнче пӗлтӗр ҫул /1026 м/ хывма пуҫларӗҫ, 4 млн тенкӗ пӗтерчӗҫ. Кӑҫал ӗҫе 11208 пин тенкӗ явӑҫтарасшӑн. Икӗ эрнерен асфальт хурса пӗтересшӗн. Муркаш-Турай-«Сӑр» автоҫул /24 км/ ҫинче юсав пырать. Унпа республика шайӗнчи Автанкасси-Муркаш-Чикме тата «Сӑр» автоҫулсене тухаҫҫӗ.

2008 ҫулта Турай ялӗ ҫумӗнчен иртекенскерӗн кӗскерех сыпӑкне /4,5 км/ ҫӗнетнӗ, вӑрманраххине /13,3 км/ хӑйӑр, вӗт чул, асфальт сарма кӑҫал 42 млн тенкӗ уйӑрма пӑхнӑ. Объектра экскаватор – 2, асфальт тикӗслевҫи – 3, груз турттаракан автомашина – 13. Ҫак тунти кунтан асфальт саркӑч ӗҫлеме тытӑнчӗ.

2011 ҫулта Вӑрмар районӗнчи Ҫӳлти Кинчер-Вӑтакас ҫула тума /1072 м/ пуҫларӗҫ, ҫӗртме уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче вӗҫлерӗҫ. Шӑмӑршӑ районӗнчи Шӑмӑршӑ-Суйкӑн-Алтышево-Энӗш автоҫулӑн Шӑмӑршӑ ялӗнчен пуҫласа Улатӑр чикки еннелле тӑсӑлакан сыпӑкне /466 м/ ҫӗнетрӗҫ. Хӗл каҫиччен Улатӑр, Йӗпреҫ, Канаш, Хӗрлӗ Чутай, Пӑрачкав, Шупашкар, Шӑмӑршӑ районӗсенчи, ытти ҫӗрти республика ҫулӗсем тӗлӗтӗлӗпе ванчӗҫ. Ҫул-йӗрҫӗсем лакӑм-тӗкӗме асфальтпа сапларӗҫ.

■ **Ирина АНИСИМОВА,**

**ЧР транспортпа ҫул-йӗр хуҫалӑхӗн министерствин специалисчӗ**

Реклама Пĕлтерӳ
Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07




www.profilch.ru
ПРОФНАСТИЛ
собственное производство
ангары,
комплектующие для кровли, водостоки, дымники
МОНТАЖ ЗАБОРОВ
тел. (8352) 22-95-45, 63-82-85

БЕТОН всех марок (М-200 - 2900 руб./куб.)
РАСТВОР
ОПГС
КЕРАМБЛОКИ (КБ-20 - 33 руб./шт)
доставка
тел.: 29-25-34, 29-24-88




## СУТАТĂП

**168.**Лайăх кĕрекен **таптарнă çăм.** Тел. 8-917-066-41-46.

**508.Ĕне.** Т. 8/83533/ 6-04-19.

**532.Кивĕ çурт.** Т. 8-917-651-48-73.

## УСЛУГИ

**51.Бурение** колодцев, скважин; **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Т.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 89603021293.

**160.Бурение колодцев,** углубление; **продажа и д-ка** ж/б колец. bur21.ru Т. 8-905-343-42-07.

**229.Кровля, обшивка домов.** Гарантия. **Скидки.** Т. 8-927-668-75-74.

**250.Кровельные, фасадные работы**. Монтаж водостоков. Гарантия. Качество. Т. 89033220479.

**273.Бурение скважин** на воду до 50 м. Т. 8-906-381-60-37.

**346.Бурение скважин** на воду. Гарантия. Т. 364060.

**359.Бурение колодцев. Продажа** колодезных колец. Доставка и установка. Т. 89033790901.

**416.Экстрасенс.** Т. 8-987-660-39-29.

**419.Доставка керамблоков, песка, ОПГС** – от 10 до 20 тн. Т. 8-987-673-47-54.

**456.Услуги КаМАЗа**-55102, **ф/погрузчика. Доставка** песка, щебня, кирпича, гравмассы. Сертифицированы. Т. 8-903-389-30-39.

**459.Установка** заборов, ворот, винтовых свай. Т. 8-917-650-06-40.

**460.Обшивка** домов сайдингом, **утепление.** Т. 8-902-287-27-77.

**462.Бурение скважин** на воду. Гарантия. Т. 8-906-387-13-63.

**499.Бурение скважин** на воду. Т.: 8-905-198-03-33, 8-987-674-00-30.

**513.Чистка колодцев.** Т. 89613429059.

**530.Юрист.** Т. 8-927-998-55-00.

### АНОНС ФИЛЬМА "ПРОФЕССИЯ СЛЕДОВАТЕЛЬ"

26 июля 2014 года в 13 часов 10 минут на Первом канале СОСТОИТСЯ премьера документального фильма "Профессия следователь", приуроченного ко Дню сотрудников органов следствия.

Фильм создан при активном сотрудничестве Следственного комитета России и является беспрецедентным проектом. В нем приняли участие Председатель Следственного комитета РФ А.И. Бастрыкин, руководитель управления взаимодействия со СМИ В.И. Маркин, а также следователи и эксперты-криминалисты. Фильм снят на основе материалов "громких" уголовных дел, расследованных следователями Следственного комитета России. В нем также будут продемонстрированы современные и передовые возможности новейшей криминалистической техники, с помощью которой раскрыты тяжкие и особо тяжкие преступления.

Следственное управление СК России по Чувашской Республике приглашает принять участие в просмотре указанного фильма всех заинтересованных граждан.

Администрация Батыревского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения для сельскохозяйственного производства в долгосрочную аренду сроком на 49 лет с кадастровым номером 21:08:340223:130 площадью 759 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Шыгырданское с/пос.

Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования в газете по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, с. Батырево, пр. Ленина, д. 5. Справки по тел.: 8(83532)6-14-26.

## П Р О Д А Ю

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900 р., прихожие от 3600 р., шкафы от 3300 р., комоды от 2300 р., столы от 1000 р., кровати от 4000 р. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салоны «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка. **Сайт:** www.ex-comfort.ru. Т.: 46-55-44, 8-953-899-82-24.

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; цемент, **песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**6.Песок,** гравмассу, чернозём, **торф,** щебень, **бой кирпича** с доставкой. Т. 8-903-346-07-13.

**8.Гравмассу, песок,** щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, **навоз, чернозём.** Дёшево. Д-ка. Т. 8-903-358-30-21, 44-30-21.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил, гвозди,** столбы, проволоку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, **чернозём.** Дёшево. Доставка. Т.: 89276689713, 38-97-13.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, металлосайдинг. Т. 44-44-33.

**15.Кирпич** – любой, брусчатку, **кольца,** ОПГС, КБ. **Т. 8-961-339-33-63.**

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя – чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов, **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**19.Гравмассу, песок, керамзит, бой кирпича.** Т. 8-903-322-57-66.

**20.Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы; **кровля,** обшивка домов, навесы. Д-ка. Установка. Пенсионерам **скидки.** Т.: 89022881447, 38-75-74, metalservis21.ru

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.**ПЛАСТИКОВЫЕ **ОКНА.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: **89176529694, 8-927-667-95-88.**

**23.Гравмассу, песок, бой кирпича,** щебень. Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, окучники, **опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**28.**ПЛАСТИКОВЫЕ **ОКНА – немецкое качество.** Замер. Доставка – бесплатно. Скидки. Без выходных. **Т. 8-937-010-10-54.**

**30.ОКНА** от 4200 р.; **ДВЕРИ стальные** от 8900 р. Акция действует до конца месяца. Звоните по тел. **8-937-954-92-45.**

**33.Гравмассу, песок,** щебень, **керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. **Т. 8-937-386-66-29.**

**38.Брусчатку, плиты тротуарные.** Огромный ассортимент. Укладка. Т. 8-967-470-27-36.

**42.Керамблоки 12х20х40, 20х20х40, кольца** колодезные – диам. 1,5м; 1м; 0,8м; 0,7м; 0,45м. Доставка. **Бурение.** Т.: 89876664140, 89370100141.

**46.БРУСЧАТКУ, тротуарные плиты** – дёшево. Т. 8-903-358-77-72.

**48.Керамблоки,** кольца колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. Т. 89063814420.

**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках. Цены от производителя. Т. 89053447932.

**53.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**58.Гравмассу,** щебень, песок, **керамзит,** бетон, **чернозём, навоз.** Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**61.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое **качество.** Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**71.ПИЛОМАТЕРИАЛ** /хвоя, берёза, дуб, липа, осина/, **срубы, дрова,** горбыль. Т. 89033891400.

**73.ПРОФНАСТИЛ, металлочерепицу, сайдинг,** водостоки. Скидки. Замер. Доставка. Монтаж. Т. 8-903-322-04-79.

**75.Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**76.СРУБЫ** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. **Т. 89379528467,** Владимир.

**79. Прицеп мотоблока, мини-трактора.** Т. 8-905-344-47-35.

**117.ОКНА ЧУВАШИИ.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.

**124.Песок,** щебень, **гравмассу,** керамзит, **торф,** кирп. бой, **цемент.** Т. 89033220479, 48-04-79.

**128.Пластиковые ОКНА,** деревянные. Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Скидки.** Т. 8-937-391-39-91.

**134.Кирпич** любой, **кольца, блоки.** Д-ка манипул-ом. Т. 89033587353.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

**158.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 8-927-668-93-03.

**172.Гравмассу, керамблок, песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

**221.Профнастил, металлочерепицу, водостоки,** металлосайдинг. Доставка. Замер. Строительство. Т. 89196534368.

**249.БРУСЧАТКУ, плитку** тротуарную, **керамзит,** песок в мешках. Замер. Доставка. Укладка. Т.: 8-903-322-04-79, 8-903-358-06-79.

**294.Песок, гравмассу,** щебень, бой кирпича. **Услуги КамАЗа.** Тел. 8-905-341-91-46.

**308.Гравмассу, щебень, к/б блоки.** Доставка. Т. 89278462410.

**316.Гравмассу,** песок, **керамзит,** щебень, бой кирпича, **навоз.** Доставка. Т. 89051974019.

**355.Песок, гравмассу, щебень.** Доставка. Т. 89053479783.

**390.Блоки, кирпич** красный, силикатный; **гравмассу,** песок, **керамзит, кольца.** Т. 89278629166.

**415.Кольца колодезные** от производителя. Д-ка. Т. 89278416247.

**464.Косилки, грабли, окучники,** пресс-подборщики, картофелекопалки. Доставка. Т. 8-937-956-00-54.

**476.**Новые **дизельные мини-тракторы.** Тел. 8-927-667-97-98.

**489.Кованые изделия:** заборы, мангалы, беседки. Т.: 8-919-660-71-77, 8-987-665-76-45.

**490.**Тротуарную **плитку, брусчатку, наверши, бардюры.** Т.: 8-903-066-60-35, 22-37-14.

**518.Гравмассу, щебень, песок** речной, карьерный; **чернозём,** глину. Д-ка. Т. 89520269954.

**528.Chevrolet Lanos,** 2007 г. в., дв. 1,5 л., ПБ, ГУР, музыка, сигнализация, ЦЗ, кондиционер. Цена 170 т. р. **Т. 8-927-667-01-31.**

**529.Пиломатериал** любой от производителя, **крепежные** изд., **гидропароизоляция, утеплители.** Д-ка. НДС. Т. 376-901, 440-447.

## РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

**385.Требуются плотники.** Т. 483900.

**368.Требуются:** сварщики, монолитчики, арматурщики, монтажники, плотники, разнорабочие, каменщики. Проживание, питание предоставляется. Оформление по ТК, соцпакет. Тел.: **8/8352/ 21-51-90, 37-85-75** /"АльянсГрупп"/.

**515.В Москву** срочно требуются **мастера отделочных работ.** З/п от 50000 р., жильё питание /ООО "СТС"/. Т. 8-963-770-99-62.

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т.8-960-310-98-78.

**433.КОРОВ.** Т. 8-927-850-85-64.

**474.Дом или участок.** Т. 41-38-16.

**475.Спецтехнику.** Т. 41-38-16.

*Раççей кубокĕ*

# «Атăлта» гольфсменсем вăй виçнĕ

***Шупашкарта чылай çул «Атăл» гольф клубĕ ĕçлет. Унăн хастарĕсем гольф вăййине аталантарассипе тăрăшаççĕ. Çак кунсенче унта мини-гольф енĕпе çĕр-шыв кубокĕн виççĕмĕш тапхăрĕ иртнĕ.***





Турнирта Мускав, Санкт-Петербург, Чул хула, Самар, Тольятти тата Шупашкар гольфсменĕсем вăй виçнĕ. Икĕ кунхи тупăшусен пĕтĕмлетĕвĕпе чи сумлă парнене Мускав облаçĕнчен килнĕ çамрăк хĕр Мария Жидкова тата Самарти Тимур Рамазанов тивĕçнĕ. Пирĕн ентешсенчен ăмăртура икĕ спортсмен палăрнă. Шупашкар гольфсменĕ Николай Семенов арçынсен ушкăнĕнче иккĕмĕш вырăн йышăннă, 2012 çулхи кубокăн призерĕн Любовь Зубайкинăн ку хутĕнче – бронза медаль.

Раççей кубокне тăватă тапхăрпа йĕркелеççĕ, финалти тупăшусем Чул хулара иртĕç. Унта çĕр-шыври чи вăйлă 36 гольфсмен хутшăнĕ.

**А.МИХАЙЛОВ.**

*Спорт хроники*

### Парашютпа сикесси

Мускав облаçĕнчи Руза хулин аэродромĕнче парашютçăсен хушшинче Раççей чемпионачĕ иртнĕ. Ăмăртура çĕр-шыври чи вăйлă 50 ытла спортсмен медальсен 15 комплекчĕшĕн нумай енлĕ кĕрешӳре тупăшнă. Унта Чăваш Ен парашютçисем те хутшăннă. Шупашкарти А.В.Ляпидевский ячĕллĕ спорт клубĕн хастарĕсем Андрей Агафонов, Андрей Шманов тата Андрей Ершов ушкăнсен ăмăртăвĕнче пьедесталăн виççĕмĕш картлашки çине хăпарнă. Çавăн пекех Андрей Агафонов уйрăм турнирта лайăх кăтартупа палăрнă.

### Сăнă ывăтасси

Мускав облаçĕнчи Ерино хулинче çăмăл атлетика енĕпе иртнĕ çĕр-шыв кубокĕнче пирĕн ентеш Марина Максимова медаль çĕнсе илнĕ. Универсиада-2011 тата Европа кубокĕн призерĕ, РФ спорт мастерĕ сăнна 52 метр та 50 см ывăтса виççĕмĕш вырăн йышăннă.

### Гимнастика

Чăваш Ен пикисем Испанире çулсерен йĕркелекен Пĕтĕм тĕнчери гимнастсен ăмăртăвĕнчен наградăсемпе таврăннă. Республика чысне унта Шупашкарти 6 хĕр ача /тренерĕ Ирина Штайнер/ хӳтĕленĕ. 13 çулти Настя Жеколдина 1-мĕш разрядлă спортсменсен йышĕнче ылтăн медале тивĕçнĕ. Çак ушкăнрах Даша Васильевăпа Даша Горшкова виççĕмĕш кăтартупа палăрнă. Спорт мастерĕн кандидачĕн Катя Ладыковăн та – «бронза».

### Теннис

Нумаях пулмасть Шупашкарти теннис шкулĕнче республика чемпионачĕ вĕçленнĕ. 24 спортсмен хушшинче чи ăста теннисçă ята Çĕнĕ Шупашкарти Николай Чистяков çĕнсе илнĕ. Мăшăрсен тупăшăвĕнче Павел Овсянниковпа Артем Александров çĕнтерне. Çак кунсенчех пирĕн ентешсем Мордовире иртнĕ турнира хутшăннă. Ăмăртура спортсменсем пухмача виçĕ медальпе пуянлатнă.

**А.МИХЕЕВ.**

*Мĕншĕн çапла калатпăр*

# Уруна тӳшекне кура тăс

Кинемейĕн кинĕ лавккана кайнă та йӳнĕ тăракан ĕçме-çиме пур çĕртех укçи-тенкине пĕр хĕрхенмесĕр чылай тăкакласа пĕтернĕ. Упăшки вара таçта аякка ĕçлеме тухса кайнă та çемйине укçа-тенкĕ тĕлĕшпе савăнтарайман-мĕн. Кинĕ те, çамрăкскер, пурнăç нуши-тамашине курма ĕлкĕрейменскер, нухрат епле майпа тупăнса пынине ăнкарсах çитеймен-ха.

Хуняма кинĕ лавккара туяннă таварсемпе паллашать те: «Кин, кăмăлсăр ан пул-ха, эпĕ каланине йывăра ан ил. Лавккара унта тĕрлĕ хаклă тавар, ĕçме-çиме туллиех. Ӳлĕмрен япалана туянам тесен тӳрех тӳлеме ан васка: пĕрне теприпе танлаштарса пăх, укçа вăл хăйне перекетленине, хĕссе тытнине юрататъ. Çын та унта тĕрлĕрен: шутсăр пуянни те, аран-аран пурăнаканни те çук мар. Хăв пĕлен: Петя /ывăлĕ ĕнтĕ/ чылай вăхăт ютра тар тăкса ĕçлесен те укçа-тенкĕпе ытлашши савăнтараймасть. Укçине унта та шутламасăр памаççĕ курăнать. Эсир хăвăр тĕллĕн, мансăр пурăнса курман-ха. Укçана пур тесе ал-хапăлла тăкакласа пĕтерме кирлĕ мар, асăрханса тыткалама вĕренсе пымалла. Айри тӳшек çине урана кура тăсса выртма хушнă», – ятламасăр, лăпкă сасăпа ăс парать кинне. Çук, кинĕ ним чухлĕ те кӳренмест, хунямăшĕн сăмахĕсене ăша хывать, ӳлĕмрен укçа-тенкĕпе перекетлĕрех пулмаллине ăнланлăхах ас туса юлать. Кун пек чухне пĕр-пĕринпе пĕр чĕлхе тупма, итлеме пĕлни пурнăçра пиртен кашнинех кирлĕ те çав, çук вĕт, чылай чухне пире: «Хамах пĕлетĕп», – тени ура хурса пырать-çке.

**Роман ЧЕПУНОВ**

# Гороскоп

*Утă, 28 - çурла, 3*

**Сурăх.** Тĕлĕнмелле ăнăçлă эрне. Тахçан палăртса хунине, ача чухнехи ĕмĕте пурнăçа кĕртме май пулĕ. Унсăр пуçне пурăнмалли условисене лайăхлатма, карьера картлашкипе хăпарма телей пӳрĕ. Çирĕп кăмăллисем ĕç вырăнне улăштарĕç. Çăлтăрсем асăрхаттарнине ĕненес тĕк, çапла туса йăнăшмĕç. Телей кайăкне алăран ан вĕçертĕр, тĕллев патне пуç усмасăр ăнтăлăр.

**Вăкăр.** Юрату хутшăнăвĕсен тапхăрĕ мар. Çавăнпа çăлтăрсем Вăкăрсене савнийĕпе /мăшăрĕпе/ калаçнă чухне çăвара шыв сыпма сĕнеççĕ. Кăмăлăра час-час улăштарни, ĕç çине çăмăлттайла пăхни кулленхи ыйтусене татса пама чăрмантарĕç. Финанс лару-тăрăвĕ улшăнмĕ, çавăнпа суту-илӳпе аппаланма тăхтăр.

**Йĕкĕреш.** Зодиакăн çак паллин тапхăрĕнче çуралнисен енчĕке хулăнлатмашкăн май пулĕ. Чи пĕлтерĕшли – алла кĕнĕ укçана çилпе вĕçтермелле мар. Çăлтăрсем нухрата пĕр-пĕр ĕçе хывма сĕнеççĕ. Унсăр пуçне професси ăсталăхĕн шайне ӳстерме май килĕ. Сăмах май, мĕн пур ĕçе çăмăллăн пурнăçлатăр.

**Рак.** Шел те, сывăх çыннăрсемпе пĕр чĕлхе тупма йывăр пулĕ. Çитменнине, çакна ĕçрен ывăнса таврăнни кăткăслатĕ. Ĕçтешĕрсемпе хутшăннă чухне те тимлĕ пулăр: ан мухтанăр – хăвăра ăмсанмалли сăлтав çеç тупăнĕ. Çивĕч ыйтусене те хыпаланмасăр татса парăр.

**Арăслан.** Алă усса ларма вăхăт пулмĕ. Унсăр пуçне çăлтăрсем кирек мĕнле ĕçе пуçăнсан та тимлĕхе çухатмалла марри пирки асăрхаттараççĕ. Чун туртăмĕ хыççăн ан кайăр – таврари çынсен сĕнĕвĕсене шута илĕр. Май пулсан вăхăта килте пĕчченлĕхре ирттерĕр. Халĕ карьера картлашкипе хăпарма ăнтăлмалли, юрату хутшăнăвĕсене йĕркелемелли тапхăр мар.

**Хĕр.** Шăпа чăтăмлăхăра тĕрĕслет тейĕн. Шел те, çак кунсенче сывăх çыннăрсем сире, ĕçĕре тĕрĕс мар хак пама, тиркеме пултарĕç. Тӳсĕр, тавлашăва ан кĕрĕр. Вăхăт тупса пĕр-пĕр курава çитсе килĕр. Канмалли кунсенче хĕле хатĕрленĕр, пахчара тăрмашăр.

**Тараса.** Пуçлăхăрпа калаçнă чухне хăвăра алăра çирĕп тытăр. Ĕçтешĕрсем сирĕн ăнтăлăва кирлĕ пек хакламĕç, сăмсăра каçăртатăр тесе мăкăртатĕç. Çитĕнӳсем тăвас тесен планăрсене улăштарма тивĕ. Эрне кун çу кунĕсен илемĕпе киленĕр, шăмат кунпа вырсарни кун варени-компот хатĕрлĕр.

**Скорпион.** Зодиакăн çак паллин тапхăрĕнче çуралнисем вăй çуккине туйĕç. Сăлтавсăр пăшăрханни, çутă пуласлăха ĕненменни сывлăхăра хавшатĕç. Унсăр пуçне ĕçре çивĕч ыйтусем сиксе тухĕç – вĕсене çийĕнчех татса пама май тупăр. Çăлтăрсем вак-тĕвек пăтăрмахсене сывăха илме сĕнмеççĕ. Кăмăлăра çĕклеме кинокамит курăр, юратнă кĕнекĕре тепĕр хут вуласа тухăр.

**Ухăçă.** Ухăçăсенчен тĕслĕх илмелле – вĕсем пурнăça юратаççĕ, ырă малашлăха шанаççĕ... Вăй-хал тапса тăни çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тума пулăшĕ. Унсăр пуçне шухăшăра пĕлтерме пуçлăхăр пӳлĕмне пĕр шикленмесĕрех кĕме пултаратăр – ку сĕнĕве вăл шута илетех.

**Ту качаки.** Çынпа калаçма пĕлни, таврарисен йăнăшĕсене каçарма пултарни çемьери хутшăнусене çирĕплетме май парĕç. Çапах савнийĕрĕн /мăшăрăрăн/ кăмăлне çавăрма çăмăл пулмĕ. Шухăшăра васкаса ан пĕтĕмлетĕр. Канмалли кун хăнана йыхравлĕç – хатĕрленĕр.

**Шыв тăкан.** Эрнен пĕрремĕш çурринче пăшăрханмалли, тарăхмалли сăлтавсем пулĕç. Тăвансемпе тавлашассинчен те пăрăнса иртме хĕн – чылайăшĕ аслисем вĕрентсе, асăрхаттарса каланине ăша хывасшăн мар. Эрне вĕçĕнче лару-тăру лайăх еннелле улшăнĕ – Шыв тăкансем юлташĕсемпе тĕл пулса вăхăта савăк ирттерĕç.

**Пулăсем.** Мăшăрланнисем телейпе çиçеççĕ – килте лăпкăлăх хуçаланать-çке. Турă çырнине тĕл пулманнисем те, ахăртнех, çак кунсенче ырă кăмăллă пикепе /йĕкĕтпе/ паллашĕç. Сăмах май, кирек мĕнле паллашу та ăнăçлă – çĕнĕ туссем йывăрлăхсем сиксе тухсан пăрăнса утмаççех.



## Çанталăк

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 26.07 | + 17 | + 12 |
| 27.07 | + 20 | + 12 |
| 28.07 | + 24 | + 14 |
| 29.07 | + 27 | + 17 |
| 30.07 | + 29 | + 19 |
| 31.07 | + 31 | + 19 |
| 01.08 | + 32 | + 22 |


чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР



Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çуртĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ

"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353

Директоршăн-тĕп редакторшăн Г.А.МАКСИМОВ

Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ

РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ /директор-тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь-техника центрĕн пуçлăхĕ/

Дежурнăй редактор В.Н.БАГАДЕРОВА

Редакципе издатель адресĕ: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "Хыпар".

ТЕЛЕФОНСЕМ

Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор-тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата кучару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-85-87 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64

коммерци дирекцийĕ,
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ, hypar2008@rambler.ru

корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин

Факс: (8352) 28-83-70
Электрон почта: hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çуртĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ,13. 56-00-23 – издательство директорĕ.



РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене параканссем яваплă.

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану сулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсенче пичетленеççĕ.



Номере 25.07.2014 алă пуснă. Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.

Тираж 8593. Заказ 2753.